К84.09(=Чув)
И97
Ч-38068

…лай ИШЕНТЕЙ



# ÇАВАЛ ЕН ÇАВРИСЕМ

Сăвăсемпе поэмăсем

Национальная библиотека ЧР
4-038068

К К 84.09(2Чув)
И 97

Николай ИШЕНТЕЙ

# ÇАВАЛ ЕН ÇАВРИСЕМ

Сăвăсемпе поэмăсем

КР

Çĕрпӳ - 2003 çул

К84.(2=Чув)6-5
Дарственный экз.

УДК 821.512.111
ББК 84 (2 Рос=Чув) – 5
И 97

ПРОВЕРЕНО
2010

Ч-38068

Лицензия ЛР № 040992 от 28 июля 1999 г.

Сдано в набор 04.01.2003г. Подписано к печати 6.02.2003г.
Формат 60x90 1/32. Бумага офсетная. Гарнитура Arial Cyr Chuv.
Печать офсетная. Усл. печ. л. 3.
Тираж 1000 экз. Заказ № 2.

РГУП «Цивильская типография»
Мининстерство печати и информационной политики ЧР

429900, г. Цивильск, ул. Просвещения, 41

НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

Юлашки çулсенче поэзие кăмăллакансем Николай ИШЕНТЕЙ сăвви-поэмине хапăлласа йышăнма тытăнчĕç. Унăн хăйне евĕрлĕ сассине критиксемпе ăсчахсем те палăртаççĕ. Чăваш патшалăх университечĕн филологипе культурологи факультетĕнче ăсне туптани ăна мĕн пĕчĕкрен канăç паман литература ĕçĕнче те ăнăçуллăрах ĕçлеме пулăшать. Унăн юратнă темисенчен пĕри - ĕç çыннин техĕмлĕ кăмăл-сипечĕ. Çыравçăн кăмăла килекен хайлавсем ачасем валли те чылай.

Н. Ишентейĕн пултарулăхĕ ӳссе пынине юлашки çулсенче пичетленнĕ хайлавĕсем те лайăх кăтартса параççĕ. Çак тĕлĕшпе унăн эпикăлла жанрпа çырнă хайлавĕсене палăртмалла: «Çуралман ача сасси», «Ӳкерчĕклĕ çыру», «Салтак тӳми», «Юп çăлтăр».

Поэтăн çĕнĕ кĕнекине тĕрлĕ çулсенче çырнă сăвви-поэмисем кĕнĕ. Вĕсем вулакана саманапа этем шăпи пирки шухăша ӳкереççĕ, чунне пăлхатаççĕ, юрату туйăмне вăратса этем пархатарне пуянлатаççĕ. Е поэт сăмахĕсемпе каласан:

Ырри енне те, усалли енне те çул каять.
Этем кунçул тăваткăлĕн шăп варринче тăрать.
Çĕрпе тӳпе ачи хăш еннелле ура пусать,
Тĕнче те çав енне систермесле кăштах куçать.

Поэт «кунçул тăваткăлĕнче тăракансене» ырри патне - «пурнăç çиппинчен килĕшӳ тĕрри тĕрлеме» йыхравлать. Эппин, «Çавал ен çаврисем» çĕрпе тӳпе хушшинче саккăрла авкаланса çаврăнччăр, ырă ĕмĕтсем пурнăça кĕччĕр.

**Аристарх ДМИТРИЕВ.**

Ĕçле-ĕçле... Вилсен те пĕтес çук ĕç.
Ентешĕм, кил, пĕрле ларçа канар.
Ĕç лашисем те хӳтерсессĕн чупĕç,
Мĕн-ма пулатпăр мĕскĕн янавар.

Ĕçре ырсассăн тивĕç пур канма та.
Кĕрсем поэзин ешĕл пахчине.
Чечек шăрши çеç мар - унта тупатăн,
Ятран валеçнĕ уçлăх парнине.

Кашни парни кунçул хакне кăтартĕ
Чап-чакăр чăнлăх тĕкĕрĕ çинче.
Эппин, пĕрле пĕр ăстрăм çаврăнар-и
Сăмах тĕрри-асамĕн пахчинче.

## ÇАВАЛ ÇАВРĂМĔ

Тĕкĕр пек шывра сăнать-çке
Хăй сăнне хăва хулли,
Вăййа тухнăн курăнать-çке
Улăхра Çĕрпӳ хули.

Мăн Çавал - хула илемĕ,
Ешĕл çуркунне ăшши:
Ик çыран - чечек чĕркемĕ,
Варринче - хумсен ташши.

Кĕмĕл юхăм, çаврăн-çаврăн
Саккăрла авкаланса,
Çитмĕл çаврăм хыççăн таврăн
Тăван ен юрри пулса.

## ҪӖРПӲ

Ҫавал Атӑла ыткӑнатчӗ
Канмасӑр кунҫул юппинче,
Патвар вырӑспа Ҫӗрпӳ паттӑр
Тӗл пулчӗҫ вӑрман катинче.

Чулран ҫирӗп крепость хӑпартрӗҫ
Ик улӑп хура тар тӑкса,
Пӗрле туслӑх маршӗ янратрӗҫ
Кӑвак инҫете ҫул хывса.

Пайланӑ ҫапла икӗ халӑх
Ырри-нушине ҫурмалла,
Ыр ӗҫӗн пулать ырӑ палӑк -
Ҫӗрпӳ ятлӑ шӗкӗр хула.

Иртни ытама вырнаҫаймӗ
Сарсан та Сар кун асамне,
Ҫӗршер ӗмӗрсем те пуҫ тайӗҫ
Ҫавалӑн ачаш ытамне.

## ЮХАН ВУТ

Юхан шывӑн ялан юхас шут -
Ту енчен айлӑма юхмалла.
Тепӗр май талпӑнать юхан вут,
Юхӑма хирӗҫле - тӑвалла.

Вӑхӑт шыв пек юхать - таврӑнмасть,
Юхнӑ май Кунпа Ҫӗр ылмашать.
Юхан вуттӑм ҫеҫ канӑҫ памасть -
Шӗл кӑвар ҫине чӗнчӗ ташша.

Юхан вӑхӑт - хӑйле ырӑ ӗҫ.
Манӑҫа тивӗҫли кайӗ кӗҫ.
Юхан вут юхтӑр-и тӑвалла -
Чун ҫуттин чи ҫӳлте пулмалла.

## ÇУЛ ÇИНЧЕ

Шетмĕ енсене

Çул çинче иртен-çӳрен ывăнса çитсен
Хапăл тăвĕ Шетмĕ ен хăнана кĕрсен.
Пирĕн иртĕ ывăнни, сирĕн - пăлханни,
Йывăр çула çăмăллатĕ кӳршĕ ен çынни.

Çул çинче иртен-çӳрен инкеке лексен
Хапăл тăвĕ Шетмĕ ен - çăлĕ инкекрен.
Пирĕн пулĕ çул уççи, сирĕн - чун уççи,
Йывăр çула çăмăллатĕ чун-чĕре уççи.

Ĕмĕр пĕрле çĕр çинче пурăнас тесен
Килĕшӳ тĕрри тĕрлер пурнăç çиппинчен.
Çавалпа пĕрлештĕр-и Шетмĕ ен тĕрри,
Атăл хумĕнче те юхтăр чĕрĕлĕх юрри.

## ВИÇĔ ĂРУ МЕХЕЛĔПЕ

Фермер çемйине

Аслаçун пулнă ӳсĕм еткерĕ -
Хăват илнĕ ана вăйĕнчен.
Ĕç майне тытса пынă типтерлĕн
Уйрăлмасăр аки-сухинчен.

Сан та пур-ха ун пек ĕç манерĕ:
Лаптăк çĕр çуратать вăй-хăват.
Тăрмаланчăк хире тирпейлерĕ
Çивĕчлетнĕ сӳре-агрегат.

Çĕр çине акăнать сортлă тырă,
Тăпрара пур асамлă сĕткен.
Пĕчĕк ывăл ачун ĕмĕт ырă -
Ашшĕ пек вăл пулать çитĕнсен.

Юратса тунă ĕç - пархатарлă.
Кăпăш çĕр пĕрчĕсемшĕн - сăпка.
Ăшă çил ачисем ярăнтарчĕç
Тин çеç шăтнă тырра утьăкка.

Çитетех ĕмĕрхи ĕç мехелĕ
Виç ăру пĕр ĕçе кӳлĕнсен.
Ĕç майне тыттăр çын теветкеллĕн
Уйрăлмасăр аки-сухинчен.

## СИРЕ КӖТСЕ ЧӐРЕЧЕРЕН КУҪ КАЙМАРӖ

Сире кӗтсе чӑречерен куҫ каймарӗ,
Килӗрех, тархасшӑн, кӗтнӗ хӑнасем.
Ҫаврӑм-ҫаврӑм инҫе ҫул та вӑрӑм мар-и
Тӑвансем пӗрне-пӗри хисеплесен.

Кӑкшӑмра сӑра та кӑпӑклӑн чашларӗ
Ыр сунса килнишӗн кӗтнӗ хӑнасем.
Ҫаврӑм-ҫаврӑм савӑш курки телей парӗ
Тӑвансем пӗрне-пӗри хисеплесен.

Тав курки пек шӑкӑл-шӑкӑл калаҫар-и,
Ӗмӗр пӗрле пурӑнар-и, тӑвансем.
Ҫаврӑм-ҫаврӑм пурнӑҫ ҫулӗ телей парӗ
Тӑвансем пӗрне-пӗри хисеплесен.

## ҪӐКӐР ЛАШИ

Хӗлӗн-ҫӑвӗн вӑл ҫулран юлман.
Ик енче ун пулнӑ ик турта.
Ҫирӗм ҫул хушши юрта-юрта
Ял-йыша ӑш ҫӑкӑрсӑр лартман.

Ерипен ҫӳреттӗмӗр ялан.
Пурпӗр халиччен ҫулран юлман.
Тӑвалла хӑпарнӑ чух паян
Янаварӑм ӳкрӗ урараn.

Кутӑнла кӳлменччӗ пӗккине -
Ӑсатмашкӑн тиврӗ мӗскӗне.
Ӗҫӗ йывӑр пулнӑ-ҫке лашан...
Туртнӑ ҫух ҫакна асӑрхаман.

## КИМ ЧЕЧЕК

Ким чечекĕме шыраттăм
Анлă, ешĕл улăхра.
Тупрăм. Чăтаймарăм. Татрăм -
Пултăр-и ялан çумра.

Тек сив çил сана хăратмĕ,
Тăм ӳкни хăрушă мар.
Ешĕлскерĕм, пит юратрăм -
Таврана ыр шăршă сар.

Пурте пултăр: ăшă, çутă...
Савăтра шыв тап-таса.
Çук чару та, ятлаçу та -
Пурăнасчĕ савăнса.

Ким чечекĕм шăппăн, юттăн,
Хурлăхлăн пăхать куçран:
Халăхăн та кунĕ шутлă
Уйăрсассăн тымартан.

* * *

Ырри енне те, усалли енне те - ҫур утас.
Тĕнче хăй вырăнче тĕп-тĕрĕсех тăрать пулас.
Ун сисĕмĕ - чăн электронлă тараса майлах:
Этем ăҫта сулăннине сисет пĕр самантрах.

Ырри енне те, усалли енне те ҫул каять.
Этем кунҫул тăваткăлĕн шăп варринче тăрать.
Ҫĕрпе тӳпе ачи хăш еннелле ура пусать,
Тĕнче те ҫав енне систермесле кăштах куҫать.

* * *

Юмансар, юмансар,
Ман ҫине сиплӗх яр -
Пулӑшу эп ыйтатӑп санран.
Нишлӗх пуснӑ чухне,
Ӑншӑрт аснӑ чухне
Эс хута кӗрекенччӗ ялан.

Юмансар сас памасть,
Ешӗл ҫулҫӑ сармасть...
Тур ҫӑлах, юмансар сывӑ мар.
Сӑхӑ хурт сырӑнать,
Хупӑ айӗн кӑшлать.
Сассӑрах ахлатать юмансар.

Юмансар, юмансар,
Эп санпа юнашар -
Хуйхуна ҫурмалла уйӑрар.
Кур, Тӑрна хӑртнинче,
Тарӑн вар леш енче
Пиртен хӳтлӗх кӗтет Ҫӑкасар.

## ПУТЕНЕ

Ҫу. Ыраш пусне кӑларнӑ.
Ярӑнса вылять ӑрша.
Ӑнсӑртран эп асӑрхарӑм
Ик пучахлӑ ыраша.

Ӗҫ майне кура кун иртӗ:
Ик пучах - телей палли.
Ылтӑн ярӑм пӗрчӗ тирӗ
Ун ҫине хӗвел алли.

«Кил те тыт», - янрарӗ сасӑ.
Кураймарӑм кайӑкне.
Йӗкӗр сар пучах тулсассӑн
Тытӑп, путӗр путене.

## ЙĔРСЕМ

Çулсем чупаççĕ кай енне,
Йĕрсем ўкеççĕ пит çине.
Пĕр-пĕринпе хĕресленеççĕ
Тарăннипе чи ăшăххи.
Йĕрсем пулса хĕресленеççĕ
Этем телейĕпе хуйхи.
Çав йĕрсенче - кунçул таппи,
Саманапа этем шăпи.

## ÇĔР КĂМĂЛĔ

Тăпраран пулса
Тăпранах куçатпăр,
Кипкерен тухсан -
Вĕçевçе тухатпăр.

Сумлăн ярăнса
Çаврăмсем тăватпăр,
Пил паракана
Тав тума манатпăр.

Чавăхсан вăйран
Çĕр çине ӳкетпĕр,
Кăмăл аслăран
Каçарма пĕлет çĕр.

Ч-38068
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

## ПОКРОВСКИ СОБОРĔ УМĔНЧЕ

Мускав. Астăвăм керменĕ.
Пурнаççĕ унта Ырăсем.
«Чулран ăсталанă поэма», -
Калаççĕ иртен-çÿренсем.

Собор ирхи шуçăм пек çиçрĕ -
Пуç тайрăм асамлă алла.
Каçар, ятсăр чулçă! Çак ĕçшĕн
Ятна ылтăнпа çырмалла.

Ахаль хапха мар эп уçатăп -
Яр уçăлчĕ вăхăт хапхи:
Вун улттăмĕш ĕмĕр хуçа пек
Хăна кĕтме тухрĕ хайхи.

Шала пĕр-ик утăм тăватăп -
Тинкерчĕç куçран ĕмĕрсем.
Хĕм сапрĕ асамлăх хăвачĕ,
Хÿхлеççĕ теветлĕ чулсем.

Чул мар - музăн типнĕ куççулĕ
Çĕртен тÿпене капланать,
Ят-сумсăр ăçтаçăн кун-çулĕ
Çыру тĕррилле вуланать.

Чулран ăсталанă историн
Тăмхи паллă пачĕ: «Çынна
Чунри мулĕ вилĕмсĕр турĕ,
Ытти йăлт куçать тусана».

## СУХАÇĂ

Тантăшусемпе танлашаймарăн эсĕ
Шавлă урамри ача вăййисенче.
Пурте мечĕкле вылятчĕç, тĕрмешетчĕç...
Эс вара çемье тĕрекĕ вырăнчеччĕ -
Пулăшаттăн аннӳне картишĕнче.

Тантăшсем саланнă ĕнтĕ. Эс пĕччеңçĕ
Юлтăн - çамрăк çын - «малашлăхсăр» яла.
Эс хăр тăлăх çĕр хуçийĕ вырăнчеччĕ,
Чирлĕ аннӳне те ăш сăмах сиплетчĕ...
Ыткăнмарăн пуç ухса малтан-мала.

Сухаçа тухсан та хыçалта пыраттăн.
Турăн Çĕр-аннемĕр ыйтнине йăлтах:
Канмалла тесен юлашкинчен лараттăн,
Килелле тесен юлашкинчен каяттăн,
Пухура-мĕнре лараттăн шăпăртах.

Ятлă-сумлă «Аслă çăлтăрвалеçевçĕн»
Пурччĕ шӳлкеме пек орденсен çыххи.
Ĕçшĕн тав сăмахĕ те илтмерĕн эсĕ,
Чапланса курнăçланма пачах пĕлмерĕн...
Пурпĕрех ĕçре пулмарăн юлашки.

* * *

Эпĕ çиччĕ кулса çиччĕ макăртăм
Чурăс вăхăт мул е чул çутарнăран.
Çиччĕ сиксе тăрса çиччĕ такăнтăм
Телейпе инкек те çумăн пулнăран.

Çиччĕ макăрнишĕн çиччĕ савăнтăм
Пурнăçăм хаяр та савăк пулнăран.
Çиччĕ çухалсан та çиччĕ таврăнтăм
Çичĕ ют та, ырсунан та пулнăран.

* * *

Анаслӑ сӑмахӑн пылакӗ
Пылпа хӑналанӑ чухне
Куҫ пӑвнӑ пек выртрӑм хӑяккӑн,
Тӗллентӗм сар кун тӗлӗкне.

Сунаслӑ сӑмахӑн янравӗ
Чуна шарт сиктернӗ чухне
Вӑрантӑм эп - вӑхӑт йыхравӗ
Сирет ҫӗнӗ кун каррине.

Тиркевлӗ сӑмахӑн йӳҫекӗ
Вутра тӗлкӗштернӗ чухне
Тасалтӑм йалт - пурнӑҫ тӳлекӗ
Тинех парнелет канлӗхне.

## ВИÇĔ ХĔВЕЛ

Ир тухать хĕвел шевлеллĕ
Шупăр айĕнчен,
Уртăнасшăн пĕрмечеллĕ
Пĕлĕт аркинчен.

*   *   *

Вăйпитти хĕвел çĕкленчĕ
Кăнтăрла тĕлне,
Ăраскалĕшĕн тертленчĕ
Сапнă май хĕмне.

*   *   *

Каç енне хĕвел хăвачĕ
Чавăхнă чухне
Çуттăр чун çутин кăвайчĕ
Шурă тĕнчене.

## ХĔРЛĔ ТУТĂР
(Пысăк аппа халалĕ)

Эп туянтăм хĕр чухне
Тутăр хĕрлĕ тĕслине.
Хĕрлĕ тутăр ман пĕрре -
Вырттăр, терĕм, çўпçере.

Çĕнĕ пурçăн тутăра
Пит хĕрхентĕм - çыхмарăм.
Ма çыхмарăм вăхăтра?
... Ĕмĕр иртрĕ, мăнтарăн.

Пурнăç пăрнăçĕ нумай -
Хĕрхенмерĕ хуйхине,
Телее те тўртĕш май
Çавăрттарчĕ ман енне.

Хурлăхĕ хуптĕрлесе
Килчĕ-çке ўле-ўле,
Хушăран кĕрĕслетсе
Чул та çурĕ ман тĕле.

Çўçĕм хура çырăччĕ -
Хĕрлĕ тутăр юраллă.
Хуйхă пуснă çивĕтĕм
Куççулĕпех шуралчĕ.

Çавăнпа та пуçăма
Хĕрлĕ тутăр çыхмастăп,
Курнă хĕн-асапăма
Çынна-мĕне сунмастăп.

**УЛĂМ ÇĔРĔ е вăрçă хĕрĕсен хӳхлевлĕ шăпи**
Праски аппана

Молотилка чарăнмасăр
Виç капан чăмлать каçчен,
Авăн çапрăмăр канмасăр
Çичĕ кăшăл туличчен.

Каç. Вăййа тухать яш-кĕрĕм.
Иртнĕ ĕнтĕ ывăнни.
Чакăр куçлă улăм çĕрĕ
Парнелерĕ чун савни.

Парнене ытараймарăм:
Тăпăр-тăпăр турăм та
Ик алла сулсах ташларăм -
Улăм çĕрĕ курăнтăр.

Çĕмĕрĕлчĕ улăм çĕрĕ
Вăйăран таврăниччен.
«Кĕмĕл çĕрĕ парăп», - терĕ,
Тусăм авăн пĕтерсен.

Кĕтрĕм. Ĕмĕтĕм тулмарĕ -
Вăрçă уйăрчĕ пире.
Ăраскалăм пулчĕ мар-и
Улăм çĕрĕпе пĕрех.

Чун-чĕрем çеç каç та, ир те
Сикрĕ, тусăм йыхăрнăн.
Хĕр-упраç кун-çулĕ иртрĕ
Çĕрĕ витĕр шăхăрнăн.

## ЮРЛАКАН ЧЕЧЕК

Ҫӗр те пин чечек ҫӗршывӗ евӗр
Туйӑнать паян чечек пахчи.
Ярӑм-ярӑм лӗпӗшсен вӗҫевӗ
Сапаларӗ кук тӗрри шӑрҫи.

Кӑтьӑр-кӑтьӑр ярӑмне пуҫтарнӑн
Хӗр пӗрчи чупкаласа ҫӳрет.
Шӑпчӑка чие тӗм пытантарнӑ -
Янкӑс саслӑн хӑй патне чӗнет.

Хӗр ача ян кӗмӗле тытасшӑн
Чупрӗ ҫеҫкери чие енне,
Аллипе хыпаласа пӑхасшӑн
Чӗвӗл сасӑн тӗлӗнтермӗшне.

Юрлакан чечек алла кӗмерӗ -
Явӑҫтарчӗ илӗртмӗш ӗҫе:
Ип-чӑк-чӑк ҫеммиллӗ сас ӳнерӗ
Ҫӗн аккордшӑн тӑсрӗ сӗркӗче.

## САВАТПĂР МИРЛĔ ПУРНĂҪА

И. Титова, вĕрентекенĕме

Урок пуҫланчĕ те, ҫырма пуҫларăн:
«Эпир саватпăр мирлĕ пурнăҫа».
Сулахайпах илемлĕ ҫыртăн мар-и.
Сас паллисен ĕречĕ - чăн шăрҫа.

Тĕлĕннипе эп куҫ илми тинкертĕм.
Ав тахăшĕ пăшăлтатать хыҫра:
«Учитель хăй. Сивех те мар... Мĕскершĕн
Сăран перчеткепех ҫӳрет класра?»

Каҫар айванлăхшăн, вĕрентекенĕм.
Ăс панăшăн тавах. Тупса хевте,
Пин-пин тетрадь хăрах алпах тӳрлетрĕн
Пуҫ хунă вĕрентӳҫĕсемшĕн те.

Сылтăммипе историе тӳрлетрĕн.
Юнпа ҫырни тухмасть-мĕн манăҫа.
Ҫĕн ĕмĕрте те йыхравпа ҫӳретĕн -
Эпир саватпăр мирлĕ пурнăҫа.

## ЁМЁРХИ ЫЙТУ

Мĕн-ма сĕтеле тӳртĕн лартăн, юлташ?
Сайлав та хисеп - тараватлă малаш.
Ĕҫме-ҫиме амăшĕ сăй памасан
Кĕреймĕн кунҫул тĕпелне те нихҫан.

Мĕн-ма уй-хире тӳртĕн тăтăн, юлташ?
Кану та ĕҫҫи - ĕмĕрхи алылмаш.
Ана - пурнăҫ амăшĕ - вăй памасан
Кун тăрăм лавне туртса тухăн ăҫтан.

Мĕн-ма хĕвеле тӳртĕн пăхрăн, юлташ?
Ҫынпа ҫӳл тӳпе - ĕмĕрхи хурăнташ.
Таса ҫутă амăшĕ пил памасан
Шăпа пархатар виҫсе памĕ нихҫан.

## ВĔРЕНТЕКЕНЕ

Кашни кунах çуралнă кун хĕвелĕн.
Вăййи те ĕçĕ - кăмăллă, хевтеллĕ.
Тӳпе арки çинчен сапать уяв ятне
Пурне те кирлĕ чĕрĕлĕх - парне.

Кашни кунах чун тухнă кун пуль саншăн.
Вăйран ӳкен, анчах ăçтан тупан-ши
Ăшпиллĕ сăмахсем кашни ача ятне
Валеçнĕ май этем пархатарне.

## ХӐЙӐР СЕХЕЧӖ

Ӳкеҫҫӗ хӑйӑр пӗрчисем пӗр вӗҫӗм.
Кашни пӗрчи шутра кӗленчере.
- Ҫак хатӗр вӑхӑта тӗп-тӗрӗс виҫӗ, -
Пӗлтерчӗ физик урокра пире.
Хурать вӑл тепӗр майлӑ сехете -
Каллех самант сӑва пуҫлать «тетте».
Ӗҫлет пӗр кӑлтӑксӑр, чӑрмавсӑр, уҫҫӑн...
Ыранлӑха чӑмать кун хыҫҫӑн
вӗҫе-вӗҫӗн
Кун:
ывҫӑн-ывҫӑн
Ҫиле ярса тасатнӑ хыҫҫӑн
Самант купи ҫӗн ӗмӗр чухлӗ ӳсрӗ.
Кун ӳкӗмӗн пач урӑхла саккун -
Пинҫуллӑха пуҫ хӗрлӗ тӑратаймӑн.
Истори хӗвӗнчи кунсен чапне
Никам та урӑх кушеле яраймӗ,
Самант ӗречӗн юхӑмӗ ҫине
Суя сӑмах шӑрҫи те чӑмтараймӗ.

## КУКАМАЙ «ЛАШИ»

Ырӑ кӑмӑллӑ кукамая кӗтеттӗм
Эпӗ пуринчен ытла ача чухне.
Туяпа хуллен кӑштӑртатса килетчӗ,
Кучченеҫ парса тухатчӗ кашнине.

Ачапча валли пылак «шакки» - астармӑш -
Ывҫипех кӑларчӗ пӗринче хӗврен.
Пысӑк сахӑр катӑкне мана тыттарчӗ:
Пӗчӗкки час ҫитӗнтӗр ҫакна ҫисен.

Сак тулли ача шавлать, сӑйлать пурне те -
Хӑнапа уяв пӗрле ҫӳреҫҫӗ ҫав.
Пӗр хӗве хумалӑх пӗчӗкҫӗ парне те
Хуйхӑ астивмен чух - чи хавас уяв.

Аслисем кӑна ҫурма саспа пуплетчӗҫ:
«Колхозра кӑҫал тырри валеҫӗнмен...»
«Куспромри» чӑпта хуҫи» пыма чӗнет, тет...»
«Заемне саплар ача укҫи илсен...»

Кукамай кайма пуҫтаранчӗ: «Вӗт-шакӑр,
Ҫавӑтса килсемӗр манӑн лашана».
Тӗлӗнсе кӑн-кан пӑхатпӑр. Маннӑ, ахӑр.
Астӑватпӑр-ҫке - килсеччӗ ҫуранах.

Вӑл татах: «Ав, кӗтесре тӑрать хӑраххӑн
Ҫул ҫинчи ҫынна ҫур вӑй хушаканни.
Хуҫине кура «лаши» те ырханрах ман.
Ерипен кӑштӑртатса ҫиткелӗп-и?»

Пуринчен те пысӑкрах аппа ӑнкарнӑ
Кукамай пире кӑштах шахвӑртнине.
Туйине пырса тыттарчӗ васкаваррӑн,
Ӑсатмашкӑн кайрӗ ялӑн леш вӗҫне.

Ҫавӑн чух пичче мана каларӗ: «Кайӑп
Ҫирӗп, ҫӗн туя касмашкӑн вӑрмана».
«Ҫул лаши» хавассӑн юттӑр кукамайӑн,
Ҫӑмӑллӑн ҫӳретӗр ҫӑмӑлпа кӑна.

## РЕКВИЕМ

Виталий Петров юрӑҫа асӑнса

Трак сали. Капмар шкул ҫурчӗ.
Пирӗн тӑххӑрмӗш «В»-ра
«Прометей кӑвайчӗ» юрӑ
Янӑрарӗ пӗр ҫавра.

Самантрах вӑл вутлантарчӗ
Тантӑшсен чун-чӗрине,
Пурте каррӑн та хастаррӑн
Тӑсрӗҫ Витя юррине.

Пирӗн класс телейлӗ пулчӗ,
Уҫрӗ кӑмӑл каррине,
Вӑтӑр виҫӗ мӑшӑр куҫӗ
Курчӗ пӳлӗх парнине.

Ҫаврӑм турӗ кӗмӗл сасӑ
Шетмӗ ен улӑхӗнче,
Юхрӗ Атӑл пек мӑнаҫлӑн
Тӳпепе ҫӗр хушшинче.

## ПУРНĂÇ ЮМАХĔ

Мул ĕшнинче тĕл пултăм мулкача.
Каларĕ вăл: «Çакланмăн майкăча
Аяккалла сикме пĕлсен вăр-вар.
Хăрушă чăтлăх та хăрушă мар».
...Хам сукмака хывмарăм мулкачла -
Пайларăм çулташпа пур-çук мула.

Çул каççинче тĕл пултăм эп тилле.
Каларĕ вăл: «Ан пул вĕшле тĕлне.
Айваншăн тăвăр аслă çут тĕнче -
Çĕршер çул пур чеелĕх каççинче».
...Пĕлмерĕм пурăнмашкăн тилĕлле -
Чеелĕх сĕм хушмарĕ ман тĕле.

Каç хăртнинче тĕл пултăм кашкăра.
Каларĕ вăл: «Кăшла, ула, тулаш.
Çак вырăн пушă хăртнă мар вăл - аш!
Асав шăлпа мĕн кирлине шыра».
...Пĕлмерĕм пурăнмашкăн кашкăрла -
Асав шăл уçаймарĕ ман çула.

Кун катинче тĕл пултăм эп çынна.
Каларĕ вăл: «Пурнас тесен çынла
Сар хĕвеле хĕвре чиксе çӳре,
Çитетĕнех вара çитес çĕре».
...Çынпа çынлах пурнатăп пулмалла -
Хĕвел саккунĕ картламасть çула.

* * *

Йыхравпа килес пулсан хӑна-вӗрле,
Чӑвашсем тӳрех чӗнеҫҫӗ тӗпеле.
Алӑк урлӑ ал памаҫҫӗ пӗр-пӗрне,
Малалла иртсемӗр, теҫҫӗ, хӑнине.

Ӑсатса ярас пулсассӑн та кайран,
Ал тытса телей сунаҫҫӗ урамра.
Алӑк урлӑ ал памаҫҫӗ нихӑҫан -
Уйрӑлу валли пӳрт алӑкне касман.

Алӑк урлӑ та ал памӑп тӑшмана,
Кирлӗ мар пӑсмашкӑн ырӑ йӑлана.
Алӑка касмаҫҫӗ уйрӑлу валли -
Хӑлӑпне ан тыттӑр ҫичӗ ют алли.

## ТИРЕК МОНОЛОГĔ

(Куçару: Ренат ХАРИСРАН, тутарларан)

Çÿлелле ÿсме чарасшăн
Тăрăран касса ярсан, -
Туратланăп сарăласшăн
Пурнăçа юратнăран.

Сарăлас çула пÿлесшĕн
Катертсен туратсене, -
Çулçăпа çупса кĕрешĕп,
Тăрăп чĕррисен йышне.

Ăншăрт янă пек тискеррĕн
Вăтăрса тăксан çулçа, -
Çĕр-анне каллех чĕм кĕртĕ
Тымара сĕткен парса.

Ваклайсассăн татăк-татăк
Тĕп тума тымарсене, -
Кун кĕвви хывма шăтатăп
Санăн вил тăпру çине.

## ÇĂКА

Вăрмансенче ÿсет çĕр тĕрлĕ йывăç.
Çăка курнать унта ăраснарах -
Ăстаçăсен чун-чĕрине пит çывăх,
Пур йывăçран та пархатарлăрах.

Хуллен сайралнă имлĕхлĕ çăкалăх
Çынна ыр тунăран кунран-кунах:
Сахал-и кирлĕ пушăт çăпаталăх,
Чăпта валли те касăлнă пайтах.

Мĕн пуррипе ал ĕçĕ йÿнеçтернĕ -
Чĕрес те кунтăк тунă çăкаран,
Çÿпçе ăшне хĕр-упраçсем типтерлĕн
Тупра тултарнă хĕрĕх пăт таран.

Хурланчăк çыннăн кăмăлне те уçнă
Çурхи уяв çитсессĕн çăкасар.
Вун икĕ пушăт çăпати кам хуçнă,
Çавна туя кайма та намăс мар.

Çăкаранах катка та ăсталанă,
Пылне тултараканĕ те çăка,
Хăнасене пыл сăрипе сăйланă
Алран кайма пĕлмен çăка курка.

Кунçул çиппи çинçе-çке - татăласшăн.
Сыпăнтарма пĕлет мехел пурри:
Ама хупран авса сăпка çаксассăн
Çиппе ылмашнă сиктĕрме кантри.

Аманнă çĕр кăкри хуллен сывалĕ
Хунав ӳссен парка та лапсăркка,
Ача-пăчашăн пулĕ чун хавалĕ
Тетте тума та юрăхлă çăка.

Вăрмансенче ӳсет ман хурăнташăм,
Хуйха-суйха чăтатпăр çурмалла.
Çăка умне пырса пуçа таясшăн:
Тăванăм, тав туртнишĕн тăвалла.



# ÇУРАЛМАН АЧА САССИ

Поэма

## 1. Пĕрремĕш эрне

Пĕлмест пĕр çын та чун хушăннине,
Çак тĕнчене «çĕн кайăк» килнине.
Анчах та эпĕ пур. Пурнатăп, ав, эрне.
Хам сăмаха калатăп тĕнчене.

Пĕлмест анне те эпĕ пуррине,
Пĕлмест атте те эпĕ килнине.
Анчах та эпĕ пур. Илтетĕн-и, тĕнче?
Ман евĕр çын пулман-ха халиччен.

Çут уйăх курчĕ: «Кĕмĕл кайăк пуль».
Хĕвел йăл кулчĕ: «Ылтăн кайăк пуль».
Анне çаплах сисмест эп килнине,
Пĕлмест атте те эпĕ пуррине.

Е «ылтăн-и», е «кĕмĕл-и» - ăнланăр:
Эп çын. Çынах. Çынран юласшăн мар.
Телей курмашкăн тивĕç те пур манăн -
Этем прависĕр кайăк пулас мар.

Тавах: тухаççĕ уйăхпа хĕвел.
Вĕсем пулсассăн, çитĕ-ха мехел.
Тĕнче те пĕлĕ эпĕ пуррине,
Хисеплесе пуç тайĕ ман енне.

## 2. Виççӗмӗш эрне

Кама мӗн ӗç эп вӗтӗркке пулни.
Чи пӗчӗк чунӑн пур хӑйне пӳрни.
Пӗччен пурнатӑп хӑтлӑ керӗмре -
Парне те парӑм çук ман халлӗхе.

Кунçул пама ыйтатӑп аннерен.
Телей сунма ыйтатӑп аттерен.
Ан шикленсемӗр парӑма кӗме -
Ӑна татмашкӑн хатӗрех парнем.

Парни хамах-çке: эп арçын ача.
Сенкер куçсем - ик йӑлтӑркка шӑрçа.
Ман евӗр кӑмӑл тӗнчере пӗрре.
Çав кӑмӑл еккипе тапать чӗре.

Хӑрах питре вылять хӗвел çути.
Çиçет çут уйӑх шевлипе тепри.
Çавна анне сисмест - чӗри сисет.
Курмасть атте те - кӑмӑлӗ килет.

Аннен ачаш чӗри эп килнӗрен
Чӗкеç пулса юрларӗ пӗр кана.
Çуначӗ тутана тивретнӗрен
Чӗкеç чӗлхиллӗ турӗ вӑл мана.

Атте чӗри салатнӑ тӗвӗрен
Хӑватлӑ кӑйкӑр тухрӗ ирӗке.

Çуначĕ кăмăла çĕкленĕрен
Çав кăйкăр евĕр чунăм ĕрĕхет.

Вунсакăр кун тултартăм эп паян,
Вунсакăр çул та çитĕ пурăнсан.
Ман сассăма та илттĕр çут тĕнче,
Ан мантăр шутлама суйлавсенче.

Вут кайăк кăмăлне туять поэт,
Сар кайăк сассине илтет поэт.
«Çĕн кайăка» та эс пĕрре тăнла,
Ман сассăма пĕр ăстрăм рифмăла.

Тĕнче суйлавĕ пулмалла тепре,
Унта суйлаççĕ çĕнĕ ĕмĕре.
Çав суйлавра бюллетеньсем çеç мар,
Кашни çынна чун хĕлхемне тыттар.

Ман сассăма пĕр ăстрăм рифмăла,
Суйлавçă панă сас тесе шутла.
Чун тĕпĕнчен çут тĕнчене кăлар -
Эп халь этем прависĕр кайăк мар.

**3. Çиччĕмĕш эрне**

Ак хускалаççĕ пĕчĕк аллăмсем,
Ак вылянаççĕ ĕнтĕ урасем.
Эп юратасшăн пултăм аннене,
Чуппа тăвасшăн пултăм аттене.

Вĕсем шутлаççĕ урăххи çинчен -
Пустуй çĕклем чăрмантарать иккен.
Анне калать: «Пулмасть ўстересси».
Атте калать: «Çĕклемĕ ытлашши».

Çав çĕклеме пăрахмалла вĕсен -
Çемье бюджечĕ шăтăклă иккен.
Ма пăлханатăр-ха, атте-анне?
Эп çитĕнсен саплатăп шăтăкне.

Чĕлхем туять чĕкеç ереветне,
Туять-çке кăмăл кăйкăр хăватне.
Анчах никам та сассăма илтмест,
Никам та шухăш-кăмăла сисмест.

Атте ятлать çĕршыв çулне-йĕрне,
Анне ятлать инфляци йыттине.
Ма кулянатăр-ха, атте-анне?
Тяппи ман пусĕ тĕрĕс çул çине.

Чупма хатĕрленеççĕ урасем,
Чăмăртанаççĕ пĕчĕк аласем.
Тата кăштах ўсем-ха: ун чухне
Хўтерĕп эп инфляци йыттине.

Парламентăн сăвапсăр саккунне
Ма ылханса вăрçать атте-анне?
Мĕнле парламент? Ун мĕнле саккун?
Пĕлетĕп эп: саккун пур юратун.

Пĕлетĕп эп: тытать вăл тĕнчене,
Çыхăнтарать телей кăвапине.
Ăна пăхăнакан кашни этем
Пулмасть тĕнчешĕн ытлашши çĕклем.

...Телей саккунĕн çитĕ-ши мехел?
Хавхалантарчĕç уйăх та хĕвел:
Пехил парсассăн аçупа аннÿ,
Мехел çитет, иртет иккĕленÿ.

Юратупа ачашлăх саккунне
Пĕрле илсе тухас-ха тĕнчене.
Ман ал-ура тĕрекленсессĕнех
Унпа тивĕçтеретĕп кашнинех.

Пархатарне кăтарттăр тĕнчене,
Телейлĕ тутăр пур телейсĕре.
Васкамалла ман ирĕке тухма,
Сăвапсăр саккуна ылмаштарма.

...Анне чĕри шакканине илтетĕп.
Чуна çÿçентерсе сиксе илет вăл.
Ман сисĕм органĕ илет хыпар:
Тĕнче аннен ачаш арки çеç мар.

**4. Саккăрмĕш эрне**

Такам шари туса çухăрнăран,
Шартах сиксе вăрантăм ыйхăран.

Аппа ку, Таня. Килнĕ садикрен.
Ăна эп уйăратăп сассинчен.

Эп чышкăпа юнатăп Таньăна:
Эй, пысăк хĕр, мĕн кирлĕ-ха сана?
Пурнатăн ирĕк аслă тĕнчере.
Ташлас чухне ҫӳрен йĕре-йĕре.

Тухмарĕ сасă хăтлă керĕмрен -
Кăшкăрнине пулмарĕ илтекен.
Эп, авă, куртăм-илтрĕм пĕтĕмпех:
Канашлăва пуҫтарăнать ҫемье.

Эпир тăваттăн хамăр ҫемьере:
Атте, анне, Танюша, эп тепре.
Анчах ҫемье канашĕ, иҫмасса,
Нихҫан та итлемест-ҫке ман сасса.

Танюшăпа калаҫрĕҫ аслисем,
Мана сăмах чĕнмеҫҫĕ те вĕсем.
Аттешĕн эпĕ чĕрĕ чун та мар,
Аннешĕн эпĕ тан праваллă мар.

Йĕрет-ҫке Таня. Мĕншĕн вăл йĕрет?
Кӳренчĕклĕ саспа пит ĕсĕклет.
Йĕрет вăл тантăшне кӳреннĕрен,
«Чăваш чĕппи» тесе витленĕрен.

Эх, Таня, Таня! Эс мĕскер тăван?
Ху пысăк ĕнтĕ - пурпĕрех айван.
Анне чăваш, атте чăваш - пĕлен.
«Чăваш» тенишĕн мĕншĕн кӳренен.

«Чăваш чĕппи» тесе чĕнсен мана,
Чуп тунă пулăттăм калакана.
Çынсем асăрхани - телей вăл, Таня.
Мана çак тĕнчере, ав, пурте маннă.

Анне илет сана арки çине,
Парать йăваш чăваш ачашлăхне.
Эх, Таня, Таня! Эс çаплах йĕрен,
Мăнаçланас чухне эс кӳренен.

Атте пуçлать сана лăплантарма,
Хăватлă алă илчĕ ытама.
Эх, Таня, Таня! Ма тута тăсан?
Хавасланас чухне эс юншăхлан.

Чĕкеç пулса вĕçсе тухас килет,
Хĕр ачана ман йăпатас килет.
Часрах тухасчĕ çутă тĕнчене,
Шăлса илесчĕ Таня куççульне.

...Ача йĕрет - анне хута кĕрет,
Атте ятла-ятлă ăс вĕрентет:
«Калаç ялан аван чĕлхепелен,
Йăлтах ман ху чăваш пулни çинчен».

Атте, мĕскер калатăн эс пире?
Мĕнле аван чĕлхе пур тĕнчере?
Чи аванни - атте-анне чĕлхи.
Унпа ăçтан тавлашĕ урăххи.

Илтетĕр-и: чĕлхемĕр те чĕтрет.
Чĕлхе те Таньăпа пĕрлех йĕрет.
Пĕрне лăпкаççĕ, тепĕрне таптаççĕ,
Мăшкăлласа çӳп шăтăкне яраççĕ.

Ачаш та ырă кăмăллă анне!
Мĕн-ма хута кĕместĕн чĕлхене?
Мĕн-ма илместĕн арăку çине?
...Лăпланчĕ Таня - ĕсĕклет чĕлхе.

Патвар та çирĕп кăмăллă атте!
Мĕн-ма хӳтĕлеместĕн чĕлхене?
Мĕн-ма илместĕн кăмăл ытамне?
...Йăл кулчĕ Таня - хаш сывлать чĕлхе.

Атте-анне мана итлеменрен
Часрах тухас килет çак пӳлĕмрен.
Чĕкеç пулса вĕçесчĕ тĕнчере,
Лартасчĕ хам çине чĕлхемĕре.

**5. Тăххăрмĕш эрне**

Пĕлетĕп эп кулма та, кӳренме те.
Куратăп та илтетĕп чиперех.

Телей ачи пулма ӗмӗтленетӗп.
Хӗвел ҫути ҫитет-ҫке кашнинех.

Ман сисӗм органӗ пурне те пӗлӗ:
Сивве, ăшша, усалпала ырра.
Несӗлсене пӗр вунă ӗмӗр ӗлӗк
Упранă сывлăх пурăнать манра.

Чун сисрӗ усала - пытанмалла.
Пуҫа чикес анне чӗри айне.
Ҫырлахтарма инфляци йыттине
Мана персе парасшăн пулмалла.

Анне! Анне! Хур шухăшна хӳтер!
Шуйттан чури туса ан кӳрентер.
Арҫурие тухасшăн мар, аннеҫӗм,
Ҫынна тухмашкăн эп ӗмӗтленетӗп.

Арҫурисем ахаль те сахал мар
Шиклентереҫҫӗ чăвашсен чунне.
Турат хуҫаҫҫӗ вăрманта ҫеҫ мар,
Йăлтах ватаҫҫӗ несӗл йывăҫне.

Чун сисрӗ усала - пытанмалла.
Анчах ниҫта та хӳтлӗх ҫук пулас.
Ман тăхăр сыпăкри ват асанне
Юн таппинчен кăларчӗ сассине:

Чăваш хĕрарăмĕ мĕн ĕлĕкрен
Шикленнĕ-мĕн ача амакĕнчен.
Шикленнĕ... Пурпĕр чун тĕпренчĕкне
Персе паман акар йыттисене.

Хăрах урийĕ тупăкра пулсан та
Ача кипкийĕсем ун пулнă янтă.
Хĕрарăм чунĕсĕр этем кăна
Хурах пусать пуль айăпсăр чуна.

Амак пулмастăп саншăн эп, анне.
Илтетĕн-и чĕреçĕм таппине.
Эп сывă-çке. «Эпи» те пилсĕр мар.
Ача амакĕ халь хăрушă мар.

Сăпка юрри мана асамласан,
Анне кăкри хăй сиплĕхне хушсан,
Тĕпренчĕкрен çĕкленĕ пăхаттир.
...Анне, тур панă телее ан сир.

Ўссессĕн тухăп эп «вут кайăка»
Хўтĕлемешкĕн мĕскĕн çынсене.
Акар йытти те тарĕ аякка.
Инфляци те хĕстерĕ хўрине.

Анне, çăлсам чĕрўн тĕпренчĕкне.
Ан ил хур çылăха чĕрў çине.
Турри шутлатăр юлнă кунсене.
Йытта персе ан пар, анне!
...Анне-е!

### 6. Вуннăмĕш эрне

Скафандр пек кĕпе хӳтлĕхĕнче
Эп кутăн-пуçăн çаврăнма пĕлетĕп.
Атте, çакна курман-çке эс пĕрре те.
Эп саншăн чикелентĕм хальхинче.

Атте, мĕн-ма каллех сăмах чĕнместĕн.
Тен, халĕ те мана эс çын теместĕн?
Атте, манран эс ним те ан пытар -
Эп халь çынран нимпе те катăк мар.

Арçынпала арçын калаçнă пек
Кала тӳрремĕн: мĕншĕн кунĕпе
Эс йывăр шухăш-кăмăлпа çӳретĕн,
Саманана та ылханса илетĕн?

Тĕнче пасарĕ кĕр кĕрлет, анчах
Аллу сан ĕç патне пымасть пачах.
Эс тăхăр сыпăкри асаттерен вĕрен -
Пасарсенче те илнĕ вăл тĕрек.

Çич уйăх илейменшĕн ĕç укçи
Питех ан хуçăл - çирĕп хулпуççи.
Чăваш чăтма вĕреннĕ ĕмĕртен.
Тата кăштах чăт эп çураличчен.

Эп - сывă çын - сан кăмăлна çĕклетĕп,
Эп кутăн-пуçăн çаврăнма пĕлетĕп.

Пулсассăн ку чухне çаврăнăçуллă,
Пасар ĕмри те килĕ ăнăçуллă.

Чăтсам тата кăшт, чăтăмлă атте!
Ылханлă арçури ан ту манран.
Ар пуçĕн çулĕ терт-нуша енче,
Малашлăха курать вăл ачинче.

Чăваш ар пуçĕнче кантра çĕрмест,
Çынна кӳрентерни çĕре ӳкмест.
Ар ывăлне сутса яран ар пуçĕн
Кунçулĕ типĕ шанкă евĕр хуçăк.

Чăваш чунне тĕвĕлекен атте!
Мĕн-ма ултав ачи тăван манран?
Пулас ачу ултав ачи пулсан,
Килес куна мĕнпе сыпăнтаран?

Чăтсам, атте, ан хуçăл ытлашши.
Тăхта ултав ачи тума манран.
Эп çакă çутă тĕнчене тухсан,
Чечек те çурĕ несĕл йывăççи.

### 7. Вун пĕрмĕш эрне

Пуç пӳрнине ĕметтĕм киленсе...
Сисмен те, эпĕ кайнă тĕлĕрсе.
Çăхан сăмсиллĕ çын килсе кĕрет,
Телей кăвапине касса илет.

Хăла юпах тиха хӳри çумне
Çыхасшăн вăл телей кăвапине.
Хăла тиха кĕç-вĕç тапса сикет.
Акар йытти ман хыççăн ĕрĕхет.

Ӳт-пĕвĕм сӳ тăвать. Шартах сиксе
Вăрантăм эп хăрушлăха сиссе.
Тĕнче ахăлтатать: «Чăваш чĕппи,
Пӳрне телейĕпех çырлах, эппин».

Тулли телей валеçекен тĕнче!
Инкек ачи туса ан кӳрентер!
Шăпа телейĕ кăвапа çинче.
Вăл пур пулсан, эп сывă та чипер.

Телей ачи çуратакан тĕнче!
Инкек ачи туса ан кӳрентер!
Тулли этем эп. Ман юн таппинче
Кунçул таппи те палăрать чипер.

Чăваш чунне тĕвĕлекен тĕнче!
Тĕнче кулли туса ан кӳрентер!
Арçурие тухса вăрмансенче
Çĕтсе çӳресшĕн мар-çке эпĕ те.

Ахаль те чăвашсем çут тĕнчере
Çĕтсе çӳреççĕ тĕрлĕ çĕрсенче.
Пур вăй-халне те пултарулăхне
Вĕсем парайми҄ҫ хăйĕн халăхне.

Çак пурăнăç - хăналăх çеç. Пĕрех
Ачашăн та сăйлавĕ хĕсĕкрех.
Ларасшăн мар эп кун кĕрекинче,
Çынна çитесчĕ тетĕп çул çинче.

Тĕнче! Тĕнче! Кĕтрет çути тĕпрет -
Çухалнă çын та тупăнса килет.
Кун куркине тыттар эс кашнине.
Ан питĕрсем кунçул калинккине.

Эй, çут тĕнче! Кĕртсемччĕ хăнана!
Хам кĕпене саклат парап сана.
Пулас ача шăписене татни
Пулать-и пурнăçра саплаштарни?

**8. Вун иккĕмĕш эрне**

Пуçхĕрлĕ ўкрĕм эп чикеленсе,
Тĕнче мана илтменшĕн кўренсе.
Кайран лăш пулнă пит ывăннăран.
...Мухтав юрри вăратрĕ ыйхăран.

Янрарĕ гимн Чăваш Республикин.
Çурхи тĕнчемĕр чĕрĕлет-çке тин.
Такам чĕри сикет савăнăçпа.
Ман чунăм тулнă йывăр хуйхăпа.

Мухтав юрришĕн хапăл самана
Илтмест пулас çуралайман çынна:

Аннеçĕм кайрĕ тухтăрсем патне
Татса яма телей кăвапине.

Анне ларать шап-шурă пӳлĕмре,
Шутлаççĕ минутсем ман ĕмĕре.
Çут хачă пурнăç çиппине касать.
Эй, турă. Тухтăр та хурах пусать.

Анне выртать шап-шурă пӳлĕмре,
Шутлаççĕ çеккунтсем ман ĕмĕре.
Мухтав юрри çуратнă самана
Илтес темерĕ хурлăхлă çынна.

Мухтав юрри çуратнă самана
Илтет пулас поэтсене кăна.
Ман сассăма та рифмăла, поэт.
Тăнлатăр самана та президент.

Куратăп эп: кĕрекере поэт.
Куран куçпа вăл курмăша перет.
Анчах куран куçа тусассăн курмăш,
Сăмах ĕречĕ кĕвĕленĕ урмăш.

Илтетĕп эп: трибунăра поэт.
Илтен хăлхи ун илтмĕше перет.
Хăлха çине суя упа пуссан,
Чăн-чăн упа ташăçине тухан.

Тӑнлать мана каҫалӑкри поэт.
Нуша курни нуша мӗнне пӗлет.
Хӑватлӑрах пулаймӑн турӑран -
Мана эс ҫӑлайманшӑн ан кулян.

...Анне чӗри тапать, тапать, тапать...
Халатлӑ тухтӑра вӑл тав тӑвать.
Мухтав юрри пулса та ҫаврӑнать,
Хурчка пулса чуна тӑпӑлтарать.

Ман тӑхӑр сыпӑкри ват асанне
Юн таппинче кӑларчӗ сассине:
«Ҫамка ҫине этем ҫураличчен
Турри хура ҫыру ҫырать иккен».

...Ман юлашки ҫеккунт юн тумламне
Ҫӗре ӳкермӗ... Ах, анне!
..........................................................................
...Сасси ҫӗтсен те, янӑрарӗ ахрӑм.
Куҫать вӑл сӑвӑ ҫаврӑмне вӑраххӑн.

**9. Ахрӑм ҫаври**

Сӑпка юрри савмасть пуш сӑпкана.
Мухтав юрри савать мухтакана.
Укҫа куҫасшӑн укҫалли патне.
Шырать телей те телейлисене.

Чапли мухтать хăй пек чаплисене.
Вăйли те ал тытать вăйлисене.
Хăватсăрри патне хăват куçмарĕ.
Телейсĕрри патне телей пымарĕ.

Çуралайман ачашăн сŭнчĕ çутă.
Тĕнчемĕр курмăш пулчĕ-çке ăна.
Пуçа ухса сăмах пуçларĕ ода.
Çав кĕвĕпе янрарĕ самана.

Мухтав параппанне çапа-çапа,
Çĕкленчĕ параппанçă та чаппа.
Çуралайман ача сасси çĕтет -
Ун ахрăмĕ чуна шиклентерет.

Çуралайман ача шăпиллĕ лира
Телейсĕр ахрăм сас çине çеç пырĕ.
Лăплантарасшăн мĕскĕн мĕскĕне
Тĕртсе пăхать чи çепĕç хĕлĕхне.

Хŭхлев юрри тумлатрĕ куççульне
Хĕрес çинчен поэт чĕри çине.
Анчах та икĕ тăлăх - тăлăх мар.
Пĕрле пулса хиврe сăмах калар.

## 10. Эп вилсен тепĕр çул

Анне мана пăрахсан,
Йытă пычĕ туллама.

Тартăм-тартăм йытăран -
Кăшлаймарĕ чунăма.

Атте манран пăрăнсан,
Çулăхрĕ хура çăхан.
Тартăм-тартăм çăханран -
Чунăм хăтăлчĕ аран.

Пăрахсассăн та анне,
Пăрахмасть уйри çăка.
Уй пурне те курнăран
Эп те пăхрăм аякка.

Пăрăнсассăн та атте,
Пăрăнмасть лаштра юман.
Эп сире те халь илтеп
Вăрманта хăлха пуртан.

Анне мана пăрахни
Шăп çулталăк çитнине
Мăрьере çил шăхăрни
Йыхравларĕ каçхине.

Манăн чунăм çĕр хута
Таврăнчĕ тăван киле.
Кĕтĕм эп çурхи сада
Ӳхĕ пек хӳхле-хӳхле.

Чĕвĕлти чĕкеç пулса
Лартăм пĕр турат çине.
Ереветлĕ юрласа
Систеретĕп килнине.

Ирхине атте, анне
Сада тухрĕç ман пата.
Çуралайман ывăлне
Паллаймарĕç, тупата.

Çуралман çын чунлине
Чухлаймарĕ-ши аттем?
Чунăм чĕкеç пулнине
Тĕшмĕртмерĕ-ши аннем?

Таня çеç аслисемпе
Эпĕ халиччен илтмен
Ăнланма çук чĕлхепе
Чĕвĕлтетрĕ тем çинчен.

Çепĕç аллипе анне
Ачашларĕ Таньăна.
Темĕнле ют чĕлхепе
Юрă вĕрентет ăна.

Атте вăйлă аллипе
Вĕлт çĕклерĕ Таньăна,
Урăх халăх чĕлхипе
Ăс парать пулас ăна.

Тӗлӗнтӗм эп чӑннипех:
Тӑван чӗлхем ҫӗтнӗ-шим?
Е ӑна та ман пекех
Йытта персе панӑ-шим?

Чӑваш чӗлхи ман пекех
Арҫурие тухнӑ-ши?
Кӗреймен-ши хӳтлӗхе -
Йытӑ ҫисе янӑ-ши?

Курӑк пулса тайӑлса
Сӗртӗнетӗп аннене.
Вӑл хӑварчӗ таптаса
Йыт ҫӳппипе пек ачине.

Турат пулса авӑнса
Ыталатӑп аттене.
Ку та ывӑтрӗ хуҫса
Йыт хӳри пек ачине.

Пултӑм эп хура ҫырла -
Илӗртететӗп Таньӑна.
«Йыт ҫырли» тет пулмалла -
Тапрӗ ывӑтрӗ мана.

Йыт кӑшланӑ телейпе
Халь ҫӳретӗп ҫӗрӗпе,
Хӑрушла йӗре-йӗре
Хӑратас тесе сире.

## ЧĔКЕÇ ПЕХИЛĔПЕ

Хĕветĕр Павлов пурнăçĕнчи
çичĕ çаврăм кăмăл çемми

### 1. Çырмари тĕмсĕлӳ

Патăрьел укăлчи. Курăнать ĕмĕрхи
Хĕрĕх чалăш хысак тăвайкки.
Суха хыççăн канмашкăн тухать Хĕветке,
Ĕмĕт-шухăш вĕçет ирĕке.

Юратать вăл каçкӳлĕм тăма сăрт çинче.
Ункă шывĕ - асамлă тĕнче.
Тĕкĕр пек шыв çинче шуçăм ӳкнĕ шуçса
Хĕвелпе чипукла выляса.

Шăплăх уртнă шыва кĕмĕл акрĕ ырми
Эреветлĕ чĕкеç чарăнми.
Чĕрĕ сасă тивсенУнкă пичĕ путать,
Çаврăм юрă пулса çаврăнать.

Асăрхарĕ ача: пурăнать çырмара
Ятсăр-шывсăр чечек тыткăнра.
Сарăскер, хитрескер тайăлса чĕтренет,
Куршанак тивесрен шикленет.

Чечеке хĕрхенсе чун çемми кучченеç
Янтăлать янкăс юрăç-чĕкеç:
- Ачăлташ-мачăлташ,

Каç шăпканĕ акар,
Ким чечек вăййине пуçăнар!

Тухатуллă хăват пур сăмах çемминче,
Уçăлать-çке ункайлă тĕнче:
Ятсăра ят парать, эрлĕке эмеллет:
Хĕветке чĕкеç май ĕнĕрлет:

- Шеремет чечекки, ачăлташ-мачăлташ,
Ан хуйхаш, ан çуйхаш - тапалаш.
Сан малашлăх пурах, пур телейлĕ шăпа -
Юрă хыврĕ чĕкеç сан ятпа.

Эп чĕкеç чĕлхине ăнланатăп иккен,
Тĕшмĕртмен те хам çак таранччен.
Е чĕлхем чĕкеçпе хурăнташлă пулас -
Кĕвĕ-çемĕшĕн чунăм хавас.

Çак илемĕш тĕнчи ма çырма тĕпĕнче
Тĕмсĕлсе пурăнать халиччен?
Тĕлĕнтермĕш пуххи!
Мĕн кăна кунта çук -
Куракан-илтекен кăна çук!

Çырмари илеме илмеллех ытама,
Тухмалла çĕклесе урама.
Асăрхатăр кашни -
Вăл мĕнле теветкел.
Капăрлантăр чи сумлă тĕпел.

**2. Тухату**

Ункă шывĕ йăлтах пытансан сĕмлĕхе
Килелле уттарать Хĕветке.
Ват йăмра патнелле ҫывхарать шăхăрса -
Пĕр кĕслеҫĕ ларать юрласа.

ЮРĂ: Юр-хир тăрăх кумларăм,
Кĕмĕл сасă суйларăм.
Пĕрчĕн-пĕрчĕн пухнă чух
Куҫҫуль пулса тумларĕ.

Ăраскал кашниннех ăрасна - лартăр-и...
Анчах ватă кĕслеҫĕ юрри
Кĕмĕл сас кăшăлне ҫавăрса тухатлать.
Хĕветке хускалмасăр тăрать.

ЮРĂ: Ҫулта ҫĕтрĕ ҫул утти,
Килте сӳнчĕ кил вутти,
Ĕнчĕ кайăк чĕрĕ чух
Манран савăк ҫын та ҫук.

«Ку ахаль юрăҫ мар. Имҫĕ-ши, юмҫă-ши?
«Ĕнчĕ кайăк» курма чармĕ-ши?
Чим, пырса калаҫам», - шухăшларĕ ача,
Ярса пусрĕ пĕр утăм хăйса.

ЮРĂ: Тăхăр puслăх кĕслем пур.
Тăхăр вун тăхăр кĕввĕм пур.

Çур пус кĕмĕл пăрахсан
Пĕрне юрлас кăмăл пур.

Хĕветке пăхăнать тухату хăватне,
Хыпалать хăйĕн пуш кĕсйине.
Юрăпа аташса ăнран кайнă енне
Манчĕ хăй тĕнчере пуррине.

ЮРĂ: Пилĕк пӳрне хушшинче -
Хĕлĕх карнă тĕренче.
Çав тĕренче айĕнче
Ĕнчĕ кайăк пурăнать.

Ĕнчĕ кайăк вĕçеймест,
Чул картламĕ вĕçертмест.
Ăмăрт çунат хуçăк чух
Кĕмĕл тенкĕ çăлас çук.

Ăна кĕчĕ ача: кĕслеçе пулăшма
Çутă кĕмĕл укçа кирлĕ мар.
Ĕнчĕ кайăк патне пулăшма ыткăнас,
Илеме инкекрен хăтарас.

**3. Тăпач ташши такмаклă**

Ват кĕслеçĕ юрри пулчĕ кăмăл çаври.
Тухату юрри евĕр юри
Курăнать каççерен тĕлĕкре те куçа,
Хăлхарах янăрать çу каçа.

Хĕветке ĕмĕтре ĕнчĕ кайăк пулать,
Сеп-сенкер тӳпене ыткăнать.
Вырмара чух çурли кăчăрттин тутарсах
Çуратать çемĕленĕ сăмах.

Авăнсарăм ачин аллинчи тăпачи
Тăппи-таппи тăвать юрланçи -
Хăй такмак каласа хăй ташша илтерет.
Ĕç кĕвви ĕнĕçӳлĕх кӳрет.

Хĕветке пĕлтерет ăшĕнчи шухăшне
Кăшăл хывнă чухне ашшĕне:
- Ĕçлеме пулăшать çемĕленĕ сăмах.
Тем тесен те пайти ун пурах.

Тем те курнă хресчен ывăлне ăнланать:
- Ĕç лартмасть, Хĕветке, ăс ыйтать.
Вĕренес кăмăлу пысăк-çке çав тери.
Пил сана. Ĕмĕтӳ çиттĕр-и.

Хĕветке тăрăшать -
Пӳлĕхçи васкамасть,
Ăраскал шерепи тыттармасть.
Патăрьел ачине Чĕмпĕр шкулĕ чĕнет,
Ăс-тăнне туптама пикенет.

**4. Тӳре-шара керменĕнче**

Тӳре-шара керменĕ.
Çиçет ахах-мерчен.

Чăваш ачи кĕмен-ха
Кун пек зала хальччен.

Паян хăюллăн кĕчĕ
Хисеплĕ этемле,
Концерт памашкăн кĕçĕр
Иртейрĕ тĕпеле.

Пăхас пек пултаруçă
Илемĕшне çутса
Çиçет яр çутă люстра
Йăмăхтарса куçа.

Госпожасем лараççĕ
Сапса чечек шăрши,
Господинсем шыраççĕ
Йăпанăç, чун ăшши...

Влаçпа чап-сум тус-йышĕ
Йӳçеккĕн тинкерет:
Вак халăхсен путишĕ
Мĕнле камит сĕнет?

Хыптармĕ-и йӳç эрĕм
Этемккесен çӳппи.
Ай-да, çатта эшкерĕ!
Ай-да, чăваш чĕппи!

...Концерт пуçланчĕ. Курчĕ
Культура элити,

Чăваш чĕппин те пур-çке
Чăн-чăн талант çути.

Госпожасем пуçлаççĕ
Лорнетсемпе пăхма,
Господинсем манаççĕ
Майрисене савма.

- Йĕс шăнкăрав пек сасă, -
Тет хĕрĕ улпута.
- Ммм-да, искусство аслă -
Чăнлав хуçа унта.

Çут пакунли ятуллăн
Пуçне пăрать:
- Тăхта,
Вак халăх вĕри юнлă -
Кирлех ăна нăхта.

Хĕветĕр те вылярĕ
Тăван çемĕсене.
Эй, турă!
Зал палларĕ
Чĕкеç хурăнташне.

Аслатилле кĕрлерĕ
«Браво!» - ал çуппи:
Ай-да, чăваш элкерĕ!
Ай-да, чĕкеç чĕппи!

Мухтаççĕ, чыс тăваççĕ
Çӳлхуçа пек çынна,
Вуншарăн ал тытаççĕ
Иван Якăльччăна.

- Ку мĕн? - залра илтеççĕ -
Пуçламăшĕ кăна!
«Мошенниксем» ӳсеççĕ -
Хăпартăр люстрăна!

**5. Опера хыççăнхи хӳхлев**

Парăнчĕ Глинка. Чĕрĕлчĕ опера.
Вĕç, ĕнчĕ кайăк, илем пахчине.
Хĕр тата каччă кĕтрет сапан мăшăрăн
Çутрĕç залра тухату хăватне.

Юррăн пулминччĕ нихçан та вĕçлемĕшĕ -
Куç вĕçертмест каччă Капа çинчен.
Кам-ши хуçи кăмăл çаврăм илемĕшĕн?
Мĕншĕн тивретрĕ чуна вут çĕмрен?

Е Антонида ятне курнăçланчĕ-ши,
Е туйрĕ хĕр юрату кăмăлне?
Каччă çакна пĕлеймерĕ - пăлханчĕ-çке!
Тухрĕ Сусанин шăпи ун тĕлне.

Опера хыççăн чăн пурнăç трагедийĕ
Пуçăнчĕ тунсăх çемми валеçме.

Кам кунçулне çак чечек чиперлетĕ-ши?
Камшăн çиçтерĕ шевлеллĕ хĕме?

Çĕрĕ пулса çаврăнать каччă шухăшĕ
Чи ăраскаллă шăпа кĕтнĕрен.
Шет таса туйăмĕ кайăк пек шухă-шим?
Пуш йăвине иленмест çĕнĕрен.

Çын кăмăлне ырату чулĕ пусрĕ-шим -
Пĕр пÿлĕме Хĕветке хупăнать.
Чун тăваннн Пултару вăйне куçрĕ-шим?
Вăл юрату йĕррипе ыткăнать.

Мĕн каласа сĕрме купăс хÿхлерĕ-ши?
Пĕр хăй кăна калама пултарать.
Туйăм вăйне виçекен писмен пулĕ-ши?
Кам юрататъ, çав хакне ăнланать.

Лĕпĕш пулса çаврăнать каччă шухăшĕ,
Чи ăраскаллă шăпа илĕртет.
Ăш вутĕнчен ырату кăна тухĕ-ши -
Чун лĕпĕшнеултав-хĕм вĕтелет.

Е вĕлле хурчĕ пулса ĕмĕр ĕмĕрлĕ
Сарă чечек ытамне ыткăнма,
Е ют садри чечекрен сĕткен ĕмĕ-ши
Пуш караса пыл ярса тултарма?

Пурнăç тăхри пулса ăстрăмăн-ăстрăмăн
Уйăх тăхри каялла çаврăнать.

Ахӑр варти ырату чуна кастӑр-и -
Шет таса туйӑм илем ҫуратать.

### 6. Пултару хӑвачӗ

Юрату вӑл - мӑнаҫлӑх. Е ҫынлӑх тупри.
Ӑраскалшӑн янрать чун юрри.
Кашнинех тыттармасть пуль телей мӑскалне,
Ёненсен те таса хӑватне.

Пурнӑҫлать хӑш чухне улшуҫла тивӗҫне:
Хӑй чури тӑвӗ чи вӑйлине.
Вӑйсӑра вӑй парать, шӑпапа вӑй вылять,
Ырату чулӗпе пусарать.

Юриех йӗкӗлтет ҫак мӑнаҫлӑх турри -
Чӗркуҫҫи ҫине ӳктӗр чури.
Ах анчах, вӑл Хӗветӗршӗн сарӑ ҫу мар -
Яш чуна тӗлкӗштерчӗ кӑвар.

Юрӑсем, сӑвӑсем ҫуралаҫҫӗ иккен
Пурте пурнӑҫ трагедийӗнчен.
Эрленӳ пухӑнсан драмӑна шӑнӑҫми
Ҫуралать куҫҫуль витӗр камит.

Ахах мар ырату, ӑна кирлӗ чӑту.
Ыратусӑр килмест ҫурату.
Улӑштарчӗ унпа композитор-улшуҫ
Пултару хӑватне пуҫма пуҫ.

Ăнтăлу вăй кěртет, ырату тěрěслет -
Пěр канмасăр Хěветěр ěçлет.
Ун патне Мускавран телеграмма килет:
«Тěп хуламăр илемěш кěтет».

Самани те ěç халăх енне çаврăнать.
Çěршывра вун-вун халăх пурнать.
Юррисем-ташшисем - пур этемлěх тупри,
Чăвашсем те тӳпе хывччăр-и.

Купăсçи акара, юрăçи сухара,
Тенорпа баритон стройкăра.
Труппа çук - пухмалла. Тухмаллах çырмаран...
Юлас мар, тăвансемěр, çынран.

**7. Униче картинчен - Мускава**

«Уйăх-парк» - пин-пин çынлă Мускав укăлчи.
Хантăсла эрешленě эстрада.
Сирěлет чěнтěрленě кěпер каркăчи,
Чăвашла янкăс юрă янрарě.

ЮРĂ: Упи каçман çырминчен
Эпир каçса килтěмěр.
Упи тухман вăрманчен
Эпир тухса килтěмěр.

Чăвашпа пěр канашлăн Раççей варрине
Тěрлě халăх вăйии тухнă евěр

Çавăнать алла-аллăн тытса пĕр-пĕрне.
Янăрать юрă-кĕвĕ кĕрлевĕ.

ЮРĂ: Атьăр вăййа тухар-и те
Вăй кĕввине калар-и.
Вăйă кĕвви пĕр сумлăх та
Пирĕн вăйă пин сумлăх.

Аслă йыш йыхрава йышăнать сĕр те сĕр,
Саккăрла çаптарни тăвăлларĕ.
Ярăнса, ал явса кăчăк туртрĕ сар хĕр -
«Уйăх-парк» чăтаймасăр ташларĕ.

ЮРĂ: Линкка-линкка авкаланма
Юман хăма кирлĕ.

Униче картинчи кĕмĕл caслă тевет
Пин-пин çыҥлă йышра çухалмарĕ.
Вăйă пуçĕ пулса Мускава кисретет
Пултаруллă чăваш хĕрĕ-арĕ.

ЮРĂ: Шупашкар туййи, шур туййа,
Çула тухма шанчăклă...

Мускава шăнăçми ирĕке туйнăран
Пин сасса пĕтĕçсе ахрăмланчĕ вăл:
Çут тĕнчемĕр хитре чăвашсем пулнăран,
Пĕр йышпа пурăнмашкăн та шанчăклă.

Шурă шупăрлă хĕр чăпар тĕс хушшинче
Шуррăнрах курăнмашкăн пуçларĕ,
Ун çыруллă тĕрри пин-пин тĕрĕ çинче
Несĕлсен пехилне хантăсларĕ.

* * *

Хумлă халăх çинче шыв пулли пек чăмса
Йăрă, шĕвĕр хаçатçă кумать.
Çын пуç урлă каçса е хул айĕн шуçса
Выставком патнелле талпăнать.

- Мĕнле халăх?
- Ăçтан?
- Кам труппи ку, юлташ?
Кун пирки памаллах репортаж.
Аптăрать выставком - кăлт сикет хулпуççи:
- Чăваш хорĕ ку. Ав ертӳçи.

Журналист регента тустарать хальхинче:
- Миçе çул пултару ĕçĕнче?
- Кам юрри?
- Кам ташши?
- Кам вĕрентнĕ ĕçе?
- Сумлă ятăр?..
- Награда миçе?

- Капелли уйăхран, çыннисем хĕвелтен, -
Те шӳтлет, те чăнлать Хĕветке.

Хор ĕҫне палăртать тăхăр ĕмĕр тăмхи,
Йĕркелет несĕлсен мешехи.

Ăнтан кайнă хаҫатҫă куҫне чармаклать,
Кăранташĕ шуҫма чарăнать:
- О, сенсаци! Тĕнчемĕр илтмен халиччен
Кун пек труппа-капелла ҫинчен!

Хĕветке хĕрӳленчĕ:
- Чăваш йăлинче
Юрă-ташă нисеп вырăнче.
Маншăн чыс та награда - чăваш пурăнни,
Сар хĕвел айĕнче савăнни.

Тăна кĕчĕ хаҫатҫă - сăмах сыпăнать:
- Ма историк шыв сыпнăн ларать?
Уҫмалла тусанланнă архив ҫăрине
Тĕпчеме ĕмĕрсен йĕррине.
- Халăх чун хавхине тупас ҫук архивра,
Упранать-ҫке вăл чĕрĕ ҫынра.
Эпĕ кам?
Ун мерчен сассине пухакан,
Хуҫине тавăрса паракан.

Юрă пултăр ҫунат пек - ҫӳретĕр инҫе
Тĕнче урлă та тăрăх вĕҫсе.
Ывăнми ĕҫ кĕввиллĕ чĕкеҫ пехилне
Валеҫмешкĕн куллен кашнине.

# ЮП ÇĂЛТĂР

**Поэма**

**Чечен вăрçинче вилнĕ салтаксене асăнса**

## УМ ÇАВРИ

Эп - çул çÿревçĕ атом.
Курмасть мана этем
Пурне те эп куратăп:
Ман куçăмсем хĕлхем.

Эп - чĕрĕ пĕчĕк атом.
Илтмест сасса этем.
Локаторла тăнлатăп:
Ман хăлхасем - хĕлхем.

Эп - Космос пайĕ атом.
Туймасть мана этем.
Ӳт-пӳ тулли хăватăм,
Ман сисĕм те - хĕлхем.

Манран хăрать чун мурĕ...
Эп - чĕрĕлĕх пĕрчи.
Хамах - обсерватори,
Кунтăрăм тĕпчевçи.

Кам пĕчĕккĕ, çав нишлĕ
Тени суя сăмах.
Ӳт-пĕвĕм пĕчĕккишĕн
Кулянас çук пачах.

Пур хисепе картаймăн -
Ун çук виçе чикки.
Хĕвре пурнать-ха пайрăм
Пиншер хут пĕчĕкки.

Мана этем картмасть-ха
Ăс-тăн тĕпелĕнче:
Планетăпа пĕр тан эп
Этемлĕх умĕнче.

Чи пĕчĕк пайăн ăс пур,
Ăс-тăн хушать хăват.
Вĕç-хĕрсĕр чĕрĕ Космос
Манпа канаш тăвать.

Этем, эп тĕк тăмастăп:
Хусканура - кунçул.
Чун măскалне курмастăн -
Хăвна картмастăн пуль.

## I. ВИЛĔМ ПУСНĂ КАÇ

Мускав. Çар госпиталĕ. Тĕксĕм каç.
Чўречерен юрпа сапать кăрлач.
Шалта юр мар, тăвар ўкет пекех
Салтак суранĕ сурчĕ çĕрĕпех.

- Мĕскершĕн, командир?
- Анне, ан яр!

Хăлхасенче янрать аташнă сас.
Командăсем парать çар пуçĕ мар,
Асап ку пӳлĕмре парать приказ.

Кунта нуша хуçса памасть кулач.
Пилпе виле хушши - шăп çур хăлаç.
Эх, пурнăç кустăрми - обойма пулĕ:
Салтак шăпи кунта хисепсĕр пуля.

...Мускав. Çар госпиталĕ. Лăпкă каç.
Чӳречерен пăхать салху кăрлач.
Тăвар сапма вăл чарăнчĕ пулас -
Аманнă салтакпа калаçрĕ врач:

- Эс халĕ те кĕмерĕн-и тăна?
Эх, яш ача, автомат мар сана,
Мĕн-ма паман-ши мечĕк е чуччу?..
Пустуй асап куратăн-çке ку чух.

Сестра та сăмахлать çурма саспа:
- Снаряд ванчăкĕпе... Ĕнер каçпа...
- Эх, вăрçă, вăрçă. Юн. Пăтраштару.
Унпа терт курнă-çке кашни ăру.

- Мăнтарăн ӳчĕ, чĕрĕ вырăн çук-тăр, -
Сурансене пăхса каларĕ тухтăр. -
Шанса ларайmăн тухату вăйне,
Уçма тивет чĕре ани тĕлне.

- Кайман-ши тарăна?- пăшăрханать сестра.
Ах, пурнăçра шанас килет ырра.
- Вăл хатĕр ĕнтĕ операцие.
- Апла пулсассăн пуçăнар ĕçе.

* * *

Телей те юплĕ сывлăх фронтĕнче,
Леш тĕнчепе çак пурнăç чиккинче.
Хирург алли пит шанăçлăн вылять,
Чĕречере куççуль тăкать кăрлач.

Хирург алли пĕр чарăнми ĕçлет:
Чăлах ÿте сиплет, касать, çĕлет...
Анчах такам тухать хирĕçлеве,
Сив сывлăш çÿçентерчĕ ÿт-пĕве.

Сиплевçĕ аллине темскер тăллать -
Çын шăпине хура хăват картать,
Пăшăлтатса шутлать минутсене,
Пусса хуçать яш ĕмĕт çунатне.

Хирург çĕççи йĕрлет кунçул йĕрне,
Анчах усал вăй пусрĕ ун çине
Яш çыннăн пурнăç чиккине тупса...
...Ытла та вăхăтсăр çÿрет супса.

## 2. УЙРĂЛАС УМĔНХИ САМАНТ

Палата пĕчĕк, тупăк евĕрлех.
Сас-чÿ те çук - масар çинчи пекех.

Ҫын чунĕ уйрăлман-ха ӳтĕнчен,
Ҫут кун курмашкăн та Турри пӳрмен.

Тăна кĕмест салтак. Тем аташать,
Хăрушă сăмахсем пăшăлтатать:
«Аннеҫĕм, утиял пуҫ урлă вит -
Чуна илме анать метеорит».

Ик алă вырăнĕ - юнланнă бинт,
Ĕсĕклесе макăрмалли камит,
Юрлать чăлах дуэт пек йынăшса
Е чунсăрлăх пародийĕ пулса.

Тен, тĕлĕрет салтак? Тĕлĕкĕнче
Вăййа тухма чĕнмест-и униче?
Пӳрне вăййи вылянăн такампа
Хускатрĕ шăппăн юнăхнă бинтпа.

Тăна кĕмерĕ каччă кунĕпе.
Ҫын чунĕ уйрăлман-ха ӳтĕнчен.
Ăшпиллĕ тухтăрсем пулăшнипе
Чĕри те тапрĕ ҫырлахса хуллен.

Анчах та чун чăтмасть: сикет, сикет...
...Ах, чун тени вăл малтанах сисет -
Телейсĕр шăпипе ҫураҫаймасть,
Чăлах ӳтре вăл вырăн тупаймасть.

* * *

Çын чунĕ уйрăлман-ха ӳтĕнчен.
Çын чунĕн пур иккен расна тĕнче:
Унта пурнать иккен витĕркуран,
Пулассине вăл пĕлтерет малтан.

Çав атомăн хĕлхемлĕ сисĕм пур.
Вăл тӳпери Юп çăлтăр пек çиçсе,
Кам юп курать-и е курать-и хур -
Хурать-мĕн туйăм урлă систерсе.

Çав атомăн обсерватори пур...
Этем сисмен хăватлă сисĕм пур.
Биоэфир ярать вăл Космоса,
Биоприборĕ тĕрĕслет ăса.

Салтакăн чунĕ те биоскоппа
Сăнать шăпа тыттарнă асапа.
Ăс арчине ярать ун çырăвне,
Этем ăс-тăнĕ чухлайманнине.

Хĕлхемлĕ сисĕм ячĕ чĕтрене
Чăлах салтакăн пĕтĕм ӳт-пĕвне.
Тăна кĕмесĕр çын хыпар илет -
Вăл тĕлĕк пек экран çине ӳкет.

...Аваллăх курăмĕ. Сунарçăсем
Çĕклеççĕ кистенсем е сăнăсем:
Тискер чĕр чунсемпе çапăçмалла -
Кашнин хăй хырăмне тăрантмалла.

Экран мĕлтлетрĕ - улшăнчĕç сынсем:
Каллех пыраççĕ ушкăнпа вĕсем.
Чухлаççĕ çут çанталăк саккунне,
Пăхаççĕ хуçалла çĕр-шыв çине.

Илемлĕ тĕнчене парăнтарма,
Ăсран хăват илсе пусмăрлама
Чи çăткăн тискер кайăк йăлипе
Вылять этем тĕнчемĕр шăпипе.

Каллех экран çинче çĕн кадрсем.
Салтак хăйне те курчĕ пăхнăçем.
Сăрт-туллă Чеченеваскать эшкер...
Вут-çулăмпа хупланчĕ БТР.

Сиксе илет асаплăн мĕскĕн чун.
Çакна тепре курас килмест-çке ун.
Тен, килĕ ырă кун хĕссе-пĕссе...
Приборĕпе сăнать вăл тинкерсе.

Инçе пăхса курать тăван ене.
Ак асăрхарĕ çын чун савнине:
Сар хĕрĕн чунĕ шанăçпа çиçет -
Хитре те сывă йĕкĕте кĕтет.

Телейсĕр чун шартах сиксе илет,
Биоскопа та куçарма тивет:
- Чун савнине ыталама май çук
Чавса таран ик аллăм татăк чух.

Салтакăн чунĕ курчĕ амăшне -
Куç пек кĕтет вăл савнă ывăлне.
- Ыраттарас килмест анне чунне -
Сирме май çук-çке унăн хуйхине.

Салтакăн чунĕ курчĕ ашшĕне,
Кĕтет вăл вăйлă та тĕреклĕ ывăлне:
- Атте патне те каяс марччĕ ман -
Мĕн курĕ вăл эп вăйсăрне курсан.

Сăнать салтак инçетлĕх ытамне,
Сыпма пулмарĕ пурнăç çиппине,
- Каçарăр, çут тĕнче, тăван-пĕтен,
Тивет-çке уйрăлмашкăн сирĕнтен.

## 3. ЧУН ТУХНĂ САМАНТ Е КОСМОС КУÇ ХĔСНИ

Управçă атом хушнă хăватпа
Çын чунĕ çыхăнасшăн Космоспа.
Епле калаçмалла-ши?.. Чун сикет,
Телей курмашкăн ăнтăлса сикет.

Ав, кăкăр чиккинчи енчĕкĕнчен
Хашлатрĕ чĕрĕ сывлăш ерипен.
Хĕлхем ылмаштарать кун-çул çипне,
Тапса кĕрет ачашлăх ытамне.

Чун тухнă вăхăт. Ӳкĕт сăмахсем.
Темле асаплăн туртăнать этем.

Кĕрен хĕлхем çыхăнăва куçать,
Тĕллевлĕ шухăш уçлăха тухать.

Эй, Космос, Космос! Эсĕ ăслă пуль,
Ăшпиллĕ пурăнма хушатăн пуль.
Анчах сана ăнланаймасть этем.
Пулаççĕ çавăнпа тискер ĕçсем.

Çынпа калаçиччен чулпа калаç
Пăшал чĕлхи пуç пулнă вăхăтра.
Сан чĕлхӳне ăнкарайман палач
Пăшал азбукине тытать асра.

Эй, Космос, Космос! Эсĕ мĕн е кам?
Чĕрех пулсассăн сассуна парсам.
Чăтма çук йывăр асапран çăлсам,
Чуна йăпатмăш çăлăнăç ярсам.

«Çынпа калаçиччен калаç манпа», -
Тесе каланăн сусăр салтака
Таса та уçă кăмăллă тӳпе
Куçне хĕсет ыйту çăлтăрĕпе.

Çын чунĕ çыхăнайрĕ Космоспа -
Ыйту хуравĕ пулчĕ ыйтупа.
Мĕскер каласшăн çăлтăр - паллă мар.
Куçне хĕсет Юп çăлтăр е вăл мар?

Эх, кам ăнланĕ Космос чĕлхине?
Епле хуравлăн унăн ыйтăвне?

Каллех çынна хута кĕрет хĕлхем
Сенкер инçетлĕхрен куç хĕснĕçем.

Хашлатрĕ сывлăш юлашки хутчен
Кăшкарĕ ваннă кăкăр чиккинчен.
Управçă атом пурнăç тĕввине
Ӳтрен илсе куçарчĕ чун çине.

## 4. УЙРĂЛНИ

Палата пĕчĕк - тупăк евĕрлех.
Сас-чӳ те çук - масар çинчи пекех.
Салтакăн чунĕ уйрăлчĕ ӳтрен,
Мачча таран çĕкленчĕ ерипен.

Йăлттам çут пайăрка шуса пырать -
Уйрăлакан чуна ыйту парать:
«Эс хатĕр-и? Асран тухмасть-и пил -
Хăвпа пĕрле ыр шухăш-туйăм ил.

Хăвар кунта хаярлăх туйăмне,
Сана чăрмантарать вăл малашне.
Мул шухăшĕ салантăр мур çине,
Кил шухăшĕ те ӳктĕр пил çине».

Чун сассăр систерет килĕшнине,
Кăшт сĕртĕнет çут пайăрка çумне:
Çăмăллăнрах туйма пуçлать хăйне,
Илет хăватлă ирĕклĕх вăйне.

Салтакăн чунĕ тинкерет çӳлтен
Чăлах кĕлеткине мĕнпур енчен -
Чуна кирли юлман-çке ӳт çинче,
Епле пурнайăн унăн ăшĕнче?

Ак, йăлтăр çутă чун ăшне чăмать -
Çын чунĕ хăй те çутăлма пуçлать.
Салтакăн ӳчĕ вилчĕ пулмалла,
Вăл хытрĕ нихăçан хускалмасла.

Ӳт-пӳ вилнишĕн çын тени вилмест,
Вăл вилĕмсĕрлĕхре тупать кĕтес.
Сăваплă вăй хайхи салтак чунне
Илсе каять Юп çăлтăр тĕнчине.

Чун сывпуллашнăн пăхрĕ çĕрелле,
Кĕç асăрхарĕ хăйĕн тăшманне.
Саккунсăр çын енне кăшт ӳпĕнсе
Тинкерчĕ пит ачашшăн, хĕрхенсе...

Вăйран кайса чечен ачи йăваннă,
Çапах парăнзсса кĕтсе ан лар
Йыша ертсе пырсассăн юн тăванĕ,
Тăван юнне юхтараканĕ мар.

Ытла та çирĕп шариат саккунĕ.
Йăх таврашне вилсессĕн те ан сут.
Айăплисем - шутра: юхтарĕç юн е
Вĕсем валли пулать хăрушă суд.

5. ĂСАТУ

Пĕлетпĕр: пур Хĕвел системинче
Хитре планета. Тĕрĕ - ун çинче.
Такам та пĕлĕ кăсăклă ятне -
Сăмахĕ шахвăртать ăсчахсене.

Юпитер вăл - юп ырăсен ырри,
Тӳпе саррин хĕм чĕртекен тĕрри,
Çӳл тӳпене карса тăраканни,
Вăрттăнлăхне пĕлсе упраканни.

Аваллăхри этем ăс-тăнĕнче
Юпитер пулнă çӳл тӳпе турри,
Этем паян та хăй ĕмĕтĕнче
Унтах шырать-çке йăпану юрри.

Тĕнчемĕр хур кăтартнă мĕскĕн чун
Ӳтне хăварчĕ çĕр çине салхун.
Юпитерăн эрешлĕ каррине
Сирсе вăл кĕчĕ çĕнĕ тĕнчене.

Йăлттам Юп çăлтăра куçайрĕ чун,
«Юп çăлтăр» ятпала эс ĕмĕр çун.
Чăн тивĕç ят кирлех-тĕр ятсăра,
Çын чунĕнчен чĕм илнĕ çăлтăра.

* * *

Поэзи пирĕштийĕ, çырлахсам,
Пуçа тайса санран пехил ыйтам:

Юп кăтартсам Сăмах асамçине
Валеçнĕ чух «Юп çăлтăр» хĕлхемне.

Е шанмасан таса хăват вăйне,
Ĕненмесен тивлетлĕ сисĕмне,
Кĕç тӳртĕн кĕрсе тӳртĕн тухĕ хăй
Килтен киле çӳрен чи ырă вăй.

Аваллăхри этем ăс-тăнĕнче
Юпитер пулнă çӳл тӳпе турри,
Телейсĕр каччăн пурнăç чиккинче
Сăмахăм пултăр ăсату юрри.

## 6. КĔМĔЛ ПĔЛĔТ УТРАВĔ ÇИНЧЕ

Хисеплĕ вулаканăм, поэта
Асамçă е ăсчах теме тăхта.
Куçать ун туйăмĕ сăмах вăйне,
Кăмăлĕпе виçет çын шăпине.

Вăл халăх туйăмне пĕр пăнчăна
Тĕллеттерсе хирлӳ туртать кăна.
Вĕçет пĕрлешнĕ туйăм ирĕке,
Сенкер тӳпе те туптăр пĕр чĕлхе.

Саккун уçмарăм эпĕ çĕнĕрен,
Ăна чӳклевçĕ пĕлнĕ ĕмĕртен:
Куçарнă вырăнтан çăлтăрсене
Шута илсе пур халăх кăмăлне.

Юп туйăм куçтăр-и ăнтăлăва
Юп çăлтăрпа кĕме çыхăнăва!
...Хĕлхем хăват чӳк халăх туйăмне
Ăсатрĕ Кĕмĕл пĕлĕт утравне.

* * *

Салтакăн чунĕ куçрĕ çăлтăра
Шăпа вăйăи вылясшăн уçлăхра.
Юп çăлтăра пирĕштисем сыхлаççĕ,
Тусан пĕрчи ӳкмешкĕн те памаççĕ.

Лăпкаççĕ, ачашлаççĕ чарăнми,
Пăхаççĕ ун çине ытарайми,
Юратупа киленĕç кăмăлне
Тивĕçтереççĕ йăлт мĕн ыйтнине.

Утрав çинче мĕн кирлĕ - пурте пур.
Кунта никам та курмĕ мăшкăл-хур.
Кунта саккун çырмаççĕ тиексем,
Йĕрке тумаççĕ çăткăн пурмиссем.

Кунта саккунлă хурахсем пусмаççĕ,
Сӳпĕлтисем ухмах сутти тумаççĕ,
Тупаймăн картлашка хăпармалли
Çурма ăс-тăнлă карьерист валли.

Кунта Çăлакана пăталамаççĕ,
Поэтсене касамата хупмаççĕ.
Кунта власть мар патша е президент -
Указ-хушу параймĕç ӳлĕмрен.

Утрав пурнать пур пĕтĕм йышĕпе
Ăшпиллĕ юрату тивлечĕпе.
Пурмис ĕçне тăваççĕ поэтсем,
Çунат хушаççĕ чун хоралĕсем.

Кунта çук самана сулнăкĕсем,
Пурра çука куçарнă суйлавсем...
Пĕрне-пĕри çимеççĕ эшкерсем,
Вĕрмеççĕ кĕрт йытти пек партисем.

Салтак халь салтак мар - Илем патши.
Ун пурнăçĕ - Юп çăлтăрчăк ташши.
Çав çемĕпе хĕвел ал çупрĕ халь,
Планетăсем те çаврăнаççĕ вальс.

...Анчах Юп çăлтăр чунĕпе - салтак.
Салтакăн тăмалла-çке хуралта.
Сӳ килнĕн позитрон сиксе илет:
Ах, чун тени ырă марра сисет.

Тăван планетăна куçпа тĕллет,
Çĕр çылăхĕ чунне çӳçентерет -
Биолокаторĕ хута каять,
Биохăват сăмах вăйне куçать.

## 7. ЮП ÇĂЛТĂР МОНОЛОГĔ
**е Юрату тăхăмĕсене ырă сунни**

Аван-и, çынсем, çут тĕнче хуçисем!
Шанманччĕ те пуль ман сасса илтессе.

Эх, кам-ха шутланă сиртен уйрăлса
Сенкер Ĕмĕрсен хапхине уçасса...

Кунта, Кĕмĕл пĕлĕт утравĕ çинче,
Нумай ман пек чун - пурте ырă, таса.
Анчах вĕсен йышĕ сахал çĕр çинче,
Унта çавăнпа пурăнмашкăн асап.

Пĕлетĕр-и, Космос - чăн улăп чĕр чун,
Куçпа та ăспа ытама илме çук.
Пур çын та сисеймĕ ун чĕрĕлĕхне,
Хиврен вылятсан та кун-çул хĕлĕхне.

Тупаймĕ этем Космоспа килĕшӳ
Ăна пусмăрласшăн кăна тĕрмешсен,
Хайхи пархатарсăр шырав-кĕрешӳ
Хăватлă вăя сивĕтет хăйĕнчен.

Сенкер Ĕмĕрсен пур пин-пин куç-хăлха -
Çынна ăнланса çывхартать ырлăха,
Анчах Ыр Вăйпа килĕшӳ ăнăçмасть -
Виçе туйăмне кашни çын чухлаймасть...

Илесшĕн пĕри ун вĕç-хĕрсĕр мулне,
Пусса куçарасшăн уçман çеремне,
Тепри хивре çыхнă нуша хутаçне
Уçса йăлт силлесшĕн этемлĕх çине.

Чи çăткăнраххи хатĕрленчĕ вăрçа -
Вăл çăлтăр çинче те пуласшăн хуçа.

Каллех аркату - мур ташшиллĕ пасар,
Планета шăпи унта пулĕ тавар.

Планета - диктатор, планета - чура.
Пуçа тайма тивĕ планета-турра.
Каллех тўсме тивĕ хура асапа,
Анчах хальхинче пысăкрах масштабпа.

Мана çак сăлтав хĕтĕртет шырама -
Юп çăлтăр пулсан та памасть лăпланма.
Хăш-пĕр çитĕнў турăм çакă ĕçре -
Халь чăн çăлтăрла пулăшасшăн сире.

Çĕр - пĕчĕк планета. Тусан - уçлăхра.
Тусан пĕрчисен те саккунĕ кăра:
Пăсмасăр самант ĕмĕрсен йĕркине
Вĕсем пухăнаççĕ эфир утравне.

Çын - пĕчĕк планета. Тусан - пурнăçра.
Анчах чĕрĕ пурнăç саккунĕ кăра:
Самантлăх пăсмасăр хевтеллĕ çулне
Вĕсем пухăнаççĕ этемлĕх йышне.

Пĕр халăх йышне тепринпе тустарни -
Чăн-чăн катастрофа - йĕрке пăсăлни.
Мехелсĕр çухалнă этемлĕх йышне
Нихçан та лартаймăн калла вырăнне.

Пĕр халăх йышне тепринпе пĕтерни -
Этемлĕх хăйне хăй çиме тытăнни.

Пачах туймасассăн ӳтпе чун хакне
Кĕреймĕ никам та чăн-чăн ҫын шутне.

Ҫапла эпĕ тухрăм пĕр шухăш патне:
Тивет ҫĕнетме ҫыннăн чун тытăмне.
Кутемĕн ăсланă юпкӳрĕм кодне
Пытармăп эп кăкăр чиккин енчĕкне.

Унпа усă курăп тĕллевлĕн ҫунса,
Таса ҫут хĕлхемлĕ юп ҫăлтăр пулса
Ҫынсен ăшĕнчи усала хӳтерме,
Этемлĕх чунне ҫăтлăхран сиплеме.

Ҫынсем! Тек ан шырăр мана тӳпере.
Сенкер Ĕмĕрсем юп кӳреҫҫĕ Ҫĕре.

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Эп - сирĕн ӳтре. Эп - хĕлхем тухату,
Ҫынна чунлă тунă таса Юрату.

...Чим, пĕр саманта шăпланмашкăн тивет -
Мана электрон делегаци кĕтет.
Сар Кун конгресне чĕнчĕ Аслă тĕнче.
Ҫынсем, сывă юлăр! Тепре куриччен...

## ЛАНТĂШ

Шурă шăнкăрав пек лантăша
Мĕншĕн татса илтĕм тĕл пулсан?
Чĕрĕ шăнкăравлăн ярăнса
Вăрманта ўсеймĕ нихăҫан.

Шăнкăрав сассиллĕ тантăша
Мĕншĕн сивĕтрĕм сив сăмахпа?
Кĕмĕл шăнкăрав пек янратса
Ҫўреме пăрахрĕ урампа.

Татас марччĕ шурă лантăша -
Тўрлетесчĕ ăссăр йăнăша,
Кĕмĕл чĕрĕ шăнкăрав пулса
Юрăпа сиплесчĕ тантăша.

## ПАРНЕЛЕНĔ ШУҪĂМ

Парнене параҫҫĕ хире-хирĕҫ.
Парнелерĕн эсĕ шурăмпуҫ шевли.
Ай, шурăмпуҫ кĕрен -
Манран эс мĕн кĕтен?
Саншăн тĕлкĕшет ман чун шевли:
Парнене параҫҫĕ хире-хирĕҫ.

Кăмăл ҫумне кăмăл - хире-хирĕҫ.
Калаҫу пуҫларăм кăмăлна кура.
Сассу шăнкăрав иккен -
Манран эс мĕн кĕтен?
Саншăнах юрлатăп ҫак юрра:
Кăмăл ҫумне кăмăл - хире-хирĕҫ.

Савнисем саваҫҫĕ хире-хирĕҫ.
Парнӳне эп йышăнатăп чĕререн.
Ку юрату иккен -
Манран эс мĕн кĕтен?
Савăнса юрлас килет куллен:
Савнисем саваҫҫĕ хире-хирĕҫ.

## АЛЬКЕШ ХӖРӖ

Ҫӗр пин чечеклӗ ӳкӗм тирчӗ
Хӗвел шевлеллӗ аллипе,
Фабрикӑра пике-кавирҫӗ
Тӗрлерӗ хантӑс паллипе.

Чӳречерен хӗвел кармашрӗ
Сӑмах татмашкӑн сар хӗрпе -
Асамата ылмаштарасшӑн
Чӑваш тӗрриллӗ кавирпе.

Хӗвел чӗлхи пӗлен эрешҫӗ
Калать чунра мӗн пуррине,
Пӗрле тӗртме сӗнет ем-ешӗл
Кавир пек пурнӑҫ тӗррине.

## ДИСКОТЕКА ХĔВЕЛĔ

Тӳпере хĕвел çӳрерĕ пĕр-пĕччен
Тĕттĕм каç чаршавĕпе хупăрличчен.
Тĕрлĕ тĕслĕ çутă - дискотекăра,
Юрату хĕвелĕ хĕмленет чунра.
Эх, сар хĕрсем, шукăль пикесем
Çаврăнса çӳреççĕ ман тавра.
Сар хĕвел тавра, сар хĕвел тавра
Çаврăнаççĕ тейĕн çăлтăрсем!

Вăйă картинче çӳретĕп варринче
Юлашки рок-музыка вĕçлеличчен.
Тĕрлĕ тĕслĕ çутă çутатать çула -
Юрату хĕвелĕ çаврăнать çапла.
Эх, сар хĕрсем, шукăль пикесем
Куç илме пĕлмеççĕ ман çинчен.
Юрату çинче, юрату çинче
Тытăнса тăрать пуль çут тĕнче!

Çăлтăрсем çунаççĕ шусăм киличчен.
Юрату валеçрĕм рок шăпланиччен.
Юрату валеçрĕм - юлчĕ хам валли
Палламан сар хĕрĕн ăшхыппи кулли.
Эх, сар хĕрсем, шукăль пикесем!
Тул çути килсен мана кичем.
Çутă ир çинче, çутă ир çинче
Тĕксĕмленчĕ маншăн çут тĕнче!

## ЮРАТУ - ЭКЗАМЕН

Физика саккунĕпе эп туслă -
Атомран молекула тăрать.
Сар хĕр тĕл пулсассăн сăмах хушрĕ:
«Çын юратăвĕ мĕнрен тăрать?»

Юрату асамĕ -
Çăмăл мар экзамен.
Телей палли лартрĕ сан куллу.
Тĕл пулу ăнсан та,
Вĕçленмест экзамен -
Туйăма хак парĕ уйрăлу.

Эп задачăсем ăста шутлатăп,
Мăйăр евĕр шĕкĕлчетĕп çеç,
Сар хĕр панă пĕртен-пĕр задача
Ниепле те ăс-тăна кĕмест.

Юрату асамлă та сĕм суккăр,
Пăхăнмасть наука саккунне -
Ĕмĕр шутласан та пĕлме çуккă
Çын телейĕн тупсăмĕсене.

## ÇУМĂР ПАРНИ

Ах, кăмăл хуçăк. Мĕн тăвас?
Кама чуна уçса парас?
Таçтаваскать пĕр сăрă пĕлĕт.
Ун шăхăш-кăмăлне кам пĕлĕ?
Хăлхасăр пуль - пачах илтмест,
Чĕлхесĕр пуль - чĕнсен чĕнмест.
Каясчĕ тинĕс леш енне
Илме сăмах хутаççине.

Çӳренĕ чух тунсăхласа
Çав пĕлĕт çитрĕ çаврăнса.
Хутаçĕ - тӳпеми тулли,
Чăн асаматлă-тĕрĕлли.
Куç хĕснĕ майăн ман енне
Салтса силлерĕ хутаçне.
Хавассăн выляса шывла
Сиплерĕ хуçăк кăмăла.

## КӐРЛАЧ КӐЛКАНĔ

Ҫил ҫапать-ши кӑрлач кӑлканне -
Таймапуҫӑн авать тунине.
Юр-ҫилхеллĕ юка юхтарать,
Шур кӑлкан поездпа тан чупать.

Кам пуҫ кӑшӑлĕ ҫыхтӑр унран -
Ҫук чеченлĕхĕ ҫак хыт хуран.
Эдельвейс чечекки пек мӑнаҫ
Ҫӳллĕ ту тӑррине улӑхмасть.

Акӑ пĕтрĕҫ ушахлӑ ҫĕрсем -
Тӑсӑлать вĕҫсĕр-хĕрсĕр илем.
Илĕртӳллĕ шап-шурӑ кӑлкан
Вирхĕнет поездпа шӑп пĕр тан.

Хумлӑ-хумлӑ инҫет ҫеҫен хир.
Аса илтĕм сана лӑпкӑ ир.
Сан пекех ҫепĕҫ саслӑ кӑлкан
Чарӑнми калаҫать манпалан.

## ТУПМАЛЛИ

Стр.

1. Автор ҫинчен 3

2. Кашни кунах ҫуралнӑ кун хӗвелӗн. Сӑвӑсен ярӑмӗ. 5

3. Ҫуралман ача сасси. *Поэма.* 38

4. Чӗкеҫ пехилӗпе. 58

5. Юп ҫӑлтӑр. *Поэма.* 72

6. Парнеленӗ шуҫӑм. Ҫамрӑклӑх сӑввисем. 90

**Николай ИЖЕНДЕЙ**

# НАПЕВЫ ЦИВИЛЯ

Стихи, поэмы

